Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ФЕВРАЉ 9 ЙУНКУН

32 (4845)-мӗш №

Чӑваш Коммунӗ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

Государствӑ умӗнчи обйазателствӑна вӑхӑтра тултарассишӗн

Аш-какай хатӗрлев ӗҫӗ пуринчен ытларах хӗллехи вӑхӑтра—тӑваттӑмӗшпе пӗрремӗш кварталта пулса иртмелле. Государствӑна обйазатељнӑй йӗркепе аш-какай тӑратмали плана ҫав вӑхӑтра тултарни аш-какай тӑратаканшӑн та, государствӑшӑн та чылай усӑлӑ. Ҫавӑнпа та малта пыракан колхозсем 1938 ҫулхи плана 1937 ҫулти тӑваттӑмӗш кварталтах—тултарса ҫитерме тӑрӑшрӗҫ. Анчах та, хатӗрлев организацийӗсем ҫавӑрнӑҫусӑр ӗҫленӗ пирки кӑҫал республикӑри аш-какай хатӗрлев ӗҫ палӑрмалла ҫителӗксӗр пулса пырать.

Пайанхи куна илсен, государствӑна обйазатељнӑй йӗркепе 1938 ҫулшӑн аш-какай тӑратмали плана 8,7 процент, выљӑх хатӗрлев системи йӗнӗпе выљӑхсене государствӑ сутӑн илмели плана мӗн пурӗ те 1 процент ҫеҫ тултарнӑ. Уйрӑм районсене илсен, февралӗн 1-мӗшне ҫулталӑк планне Улатӑр—19,3 процент, Шӑнкӑртам—21,0 процент, Йелчӗк—18,4 процент тултарнӑ пулсан, Ҫӗмӗрле, Куславкка, Хӗрлӗ Чутай, Ҫӗрпӳ, Сӗнтӗрвӑрри тата Йӗпреҫ районӗсем плана мӗн пурӗ те 3—4 процент ҫеҫ тултарса пӗтӗм республикӑна кайала туртса пыраҫҫӗ.

Мӗнле сӑлтавран килет-ха аш-какай хатӗрлес ӗҫ ҫавӑн пек пыни? Тӗп сӑлтав вӑл—районри организацисем аш-какай хатӗрлев ӗҫне хуҫалӑхла-политикӑла пысӑк ӗҫ вырӑнне хуманни. Йулса пыракансенчен Йӗпреҫ районне илер. Ҫуракине хатӗрленес ӗҫе тата вӑрман хатӗрлев ӗҫне пулӑшма тесе райӗҫтӑвкомпа парти райкомӗ йалсоветсемпе колхозсене районран уполномоченнӑйсем йарать. Райком секретарӗ Андрейев йулташ ҫав уполномоченнӑйсене йалсенче пулнӑ май аш-какай хатӗрлев ӗҫӗпе ӗҫлеме нимӗнле конкретлӑ задани те памасть. Ку ҫеҫ те мар. Хатӗрлев Комитечӗн Йӗпреҫ районӗнчи уполномоченнӑйӗн инспекторӗсем те хӑйсен тивӗҫлӗ ӗҫне тумаҫҫӗ, йалсенче пулмаҫҫӗ.

Районсенчи хатӗрлев организацийӗсене кӑҫал ҫынсем те хушса панӑ, ҫав май районран уйрӑм уполномоченнӑйсем йамасӑрах та ӗҫ лайӑхланмала пек. Анчах та, инспекторсем хӑйсен ӗҫӗпе ӗҫлеменни пӗр Йӗпреҫ районӗнче ҫеҫ мар, ытти районсенче те ҫавӑн пекех. Вӑрмар тата Куславкка районӗнчи Хатӗрлев комитечӗн районри уполномоченнӑйӗсем те йалан йалта пулас вырӑнне канцељаринчен тухмасӑр лараҫҫӗ.

Аш-какай хатӗрлев ӗҫне—государствӑ умӗнчи обйазателствӑна тултарас ӗҫе малашне нийепле те халљхин пек хӑвармала мар. Кашни районӑн, уйрӑмӑнах йулса пыракан районсен ку ӗҫре тивӗҫлӗ улшӑну туса, ПСК(б)П Обком бўровӗ аш-какай тӑратмали ҫулталӑк планне февралӗн 20-мӗшне 40 процент тултармала тесе кӑтартса панине пурнӑҫа кӗртмелех. Пӗр ӗҫе тытӑнса тепӗр ӗҫе сиктерсе хӑварса кампаниле ӗҫлени пулмала мар.

Выљӑх-чӗрлӗхӗн тепӗр продукцийӗ вӑл—сӗт-ҫу. Иртнӗ ҫулта сӗт-ҫу хатӗрлев системийӗ пит йапӑх ӗҫленӗ пирки сӗт-ҫу хатӗрлемели ҫулталӑк планне 87,5 процент ҫеҫ тултарнӑ. Сӗт-ҫу хатӗрлев йӗнӗпе плана тултарас мар хӑрушлӑх кӑҫал та пур, анчах та Маслопром йӗнчен (управљайушчи Сергейев) хусканни курӑнмасть-ха.

Аш-какай тата сӗт-ҫу хатӗрлев планӗсем тулса пыманнин тепӗр сӑлтавӗ вӑл—колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче массӑлӑ ӑнлантару ӗҫне организацилеменни. Хатӗрлев планне срукчен тултаракансене тата паха продукци паракансене государствӑ љготӑсем парать. Ҫавӑн пекех ваталнӑ пирки ӗҫлеме пултарайман колхозниксемпе йединоличниксен хуҫалӑхӗсене, Хӗрлӗ Ҫар службинче тӑракансен ҫемйисене, ӑратлӑх кӗнеки ҫине кӗртнӗ выљӑх усракансене, таварлӑ выљӑх ферми организациленӗ колхоз членӗсене государствӑ аш-какай тӑратмали обйазателствӑ йӗнӗпе те, сӗт-ҫу хатӗрлев йӗнӗпе те љготӑсем парать. Ҫавсем ҫинчен массӑна тӗплӗн ӑнлантарса памала.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫе йертсе пынипе тата ытти ӗҫсемпе пӗрлех, йалхуҫалӑх продукцисене, халљхи вӑхӑта илсен—выљӑх-чӗрлӗх продукцийӗ хатӗрлес ӗҫе те организацилесе тивӗҫлӗ йертсе пымала. Колхоз руководителӗсен, колхозниксемпе йединоличниксен хуҫалӑхӗсен государствӑна аш-какай, сӗт-ҫу тӑратасси, государствӑна тырӑ тӑратни пекех пӗрремӗш заҫогел пулса тӑнине манмала мар.

„СССР В-6“ дирижабљ ӳксе ҫӗмӗрӗлни ҫинчен

Февралӗн 5-мӗшӗнче „СССР В-6“ дирижабљ Мускав—Мурманск—Мускав маршрутпа сӑнавлӑ вӗҫеве тухнӑ. Дирижабљ командирӗ Годуванцев йулташ пулнӑ. Ҫак вӗҫев ӑнӑҫлӑ иртсен тата „СССР В—6“ дирижабелӗн машинӗсемпе чаҫӗсене сӑнаса пӑхсан, ӑна Папанин ушкӑнне пӑр ҫинчен илсе тухма йарас ыйтӑва татмала пулнӑ,—правителствӑран дирижабљ екипажӗ хӑйне унта йама ыйтнӑ.

Дирижабљ палӑртнӑ ҫулпах вӗҫсе пынӑ, радио тӑрӑх Мускавпа, Ленинградпа тата ытти пунктсемпе те ҫыхӑну тытнӑ. Ҫапла вӑл февралӗн 6-мӗшӗнче 19 сехет тӗлне Петрозаводск тата Кем хулисем урлӑ чиперех вӗҫсе кайнӑ, Кандалакша станци патне ҫывхарса пынӑ (Кандалакша станци Мурманскран 277 километрта).

Дирижабљ хӑйӗн ҫулӗпе вӗҫсе пынине Годуванцев йулташӑн радиограммисем тӑрӑх тата ӑна ҫӗр ҫинчен курнипе регистрацилесе пынӑ. Ҫапла февралӗн 6-мӗшӗнче 18 сехет те 56 минутра дирижабљ Жемчужнайа станци районӗнче (Кандалакшана ҫитесси 39 километр йулнӑ) вӗҫнине регистрациленӗ.

18 сехет те 56 минутра Годуванцев йулташран вӗҫев ӑнӑҫлӑ пыни ҫинчен радиограммӑ илнӗ хыҫҫӑн, „СССР В-6“ дирижабљ радиостанцийӗ труках ӗҫлеме чарӑннӑ, ҫӗр ҫинчи радиостанцисем нумай хут чӗнсен те дирижабљ радиостанцийӗ ответ паман.

Йандозер патне ҫитиччен дирижабљ 300 метр ҫӳллӗшӗнче, пӗлӗтсен айал сийӗ хӗррипе вӗҫсе пынӑ. Унтан Кем патне ҫитиччен—пӗлӗтсем хушшипе вӗҫнӗ. Кандалакша патнелле вӗҫсе пынӑ чухне йӳр ҫунӑ тата тӗттӗм пулса килнӗ, ҫапла курӑнми пулнӑ.

Выранта пурӑнакансем 19 сехет тӗлнеле дирижабљ Белойе море йатлӑ станци районӗнче (Кандалакшана ҫитесси 19 километр) вӗҫсе пынине курнӑ. Вара вӗсем 20 сехет тӗлнеле дирижабље тем пулчӗ пулӗ, тесе хыпарсем панӑ. Ҫав вӑхӑт тӗлӗнче выранта пурӑнакансем темскер кӗрленине илтнӗ, ун хыҫҫӑн дирижабљ моторӗн шавӗ илтӗнми пулнӑ, дирижабљ хӑй те курӑнми пулнӑ.

Дирижабљ ҫавӑнта ӳкнӗ пулӗ тесе шутланӑ района шырама вырӑнти гражданӗсенчен тата Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗнче службӑра тӑракансенчен ушкӑнсем туса йанӑ, вӗсем плансем кӳлсе тата йӗлтӗрпе кайнӑ.

Ҫав вӑхӑтрах дирижабљ радиостанцине радио тӑрӑх шырассине те вайлатнӑ, ӑна пӗрмайах чӗннӗ, анчах, унпа ҫыхӑнма пулман.

Февралӗн 7-мӗшӗнче, тулҫутласпа, шыракан ушкӑнсенчен пӗри „СССР В—6“ дирижабљ Белойе море йатлӑ санцинчен хӗвеланӑҫнелле 18 километрта ӳксе ҫӗмӗрӗлнине тупнӑ.

Малтанлӑха пӗлнӗ тӑрӑх, „СССР В—6“ дирижабљ сӑрт тӑррине перӗннипе ҫӗмӗрӗлнӗ. Сӑрт тӑррине вӑл айалтан вӗҫнипе тата йапӑх курӑннипе пырса перӗннӗ. Дирижаблӗн машинӗсем вӗҫевре лайӑх ӗҫлесе пына, сӑрт тӑррине перӗниччене—пӑсӑлни пулман.

„СССР В—6“ дирижабљ ҫинче пурӗ 19 ҫын пулнӑ. Дирижабљ ҫӗмӗрӗлнӗ чухне вӗсенчен 13 ҫын вилнӗ, 3 ҫын аманнӑ, 3 ҫын сывах.

Дирижабљ ҫӗмӗрӗлнӗ чухне ҫак йулташсем вилнӗ: Н. С. Годуванцев — „СССР В-6“ дирижаблӗн пӗрремӗш командирӗ, И. В. Пањков—иккӗмӗш командир, С. В. Демин—командирӑн пӗрремӗш помошникӗ, В. Г. Љйангузов—командирӑн иккӗмӗш помошникӗ, Т. С. Кулагин—командирӑн виҫҫӗмӗш помошникӗ, А. А. Ритсљанд—пӗрремӗш штурман, Г. Н. Мйачков—иккӗмӗш штурман, Н. А. Коњташин—аслӑ бортмеханик, К. А. Шмељков—пӗрремӗш бортмеханик, М. В. Никитин—бортмеханик, Н. Н. Кондрашев—бортмеханик, В. Д. Чернов—бортрадист, Д. И. Градус—бортсиноптик.

Ҫӑмӑл аманнӑ: В. И. Печенкин—командирӑн тӑваттӑмӗш помошникӗ, К. П. Новиков—бортмеханик, А. Н Бурмакин—бортмеханик.

Сывӑ йулнӑ: В. А. Устинович—карап инженерӗ, И. Д. Матунин—бортмеханик тата Воробйов—инженер радист.

Дирижабљ ӳксе ҫӗмӗрлнӗ вырӑна правителствӑ комиҫҫине йанӑ. Комиҫҫире: Н-ски авиаескадрилљйа командирӗ Кирсанов йулташ, дирижабљсем тӑвакан конструкторсен бўровӗн начаљникӗ Харабковски йулташ, Мускаври дирижабљ порчӗн аслӑ стартерӗ Байбаков йулташ тата Ташченкопа Порудко йулташсем.

Вилнӗ йулташсен ӳчӗсене пытарма Мускава илсе килеҫҫӗ.

Вӗсен ӳчӗсене пытарассине патшалӑх ҫине илнӗ. Хаш кун пытарасси ҫинчен кайарахпа пӗлтереҫҫӗ.

Правителсвӑ вӗсен ҫемйисене вӑхӑтлӑх пулӑшу вуншар пин тенкӗ тата ӳстерсе пенҫи памала тунӑ.

(ТАСС).

Парти организацисенче

ХАРЬКОВ, 7-II. Харьковри йалхуҫалӑх машинӗсем тӑвакан „Серп и Молот“ заводри парти организаци 10 уйӑх хушшинче заводӑнчи лайӑх ҫыннисене мӗн пурӗ 69 ҫынна парти членне тата кандидатне илнӗ.

Ҫамрӑк коммуниссем партине кӗрсен малтанхи кунсенчех парти ӗҫне хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсем пурте парти хушнӑ ӗҫсенче ӗҫлеҫҫӗ тата парти вӗренӳвӗнче вӗренеҫҫӗ.

Инженер Гордийенко йулташ, Украинӑри К(б) Парти членне илнӗскер, агитатор пулнӑ. Халӗ вӑл цехсенчи парторгсен заводри курсӗн пропагандисӗ. Храмцов йулташ, парти кандидатне илнӗскер, комсомолецсен политшкулӗн руководителӗ.

ТУЛА, 7-II. Иртнӗ кунсенче ҫеҫ пулса иртнӗ ПСК(б)П Тӗпкомӗн Тула облӑҫӗнчи оргбўровӗ партирен кӑларнисенне 42 апељљаци пӑхса тухнӑ. Райкомсемпе хула комитечӗсем коммуниссене партирен кӑларас ӗҫ ҫине мӗн тери формаљнӑ тата чунсӑр пӑхни ҫинчен (42-рен 28-шне) ПСК(б)П ретӗнчех хӑварнӑ факт каласа парать.

Калуга парти райкомне хӗсӗнсе кӗнӗ халӑх тӑшманӗсем партире тӳрӗ ӗҫлекен коммуниссене кӑларса пӑрахнӑ. Ҫапла, иртнӗ ҫулхи август уйӑхӗнче 1928 ҫултанпа парти членӗнче тӑракан, електромеханически заводри ватӑ рабочийе—Данилов йулташа партирен кӑларнӑ. Ӑна партком секретарне суйланӑ пулнӑ. Райкомра йӑва ҫавӑрнӑ халӑх тӑшманӗсем Данилов йулташран хӑтӑлма шутланӑ та ӑна халӑх тӑшманӗпе ҫыхӑну тытнӑ тесе партирен кӑларнӑ. ПСК(б)П Тӗпкомӗн Тула облӑҫӗнчи оргбўровӗ ыттисемпе пӗрлех Данилов йулташа та партирех хӑварнӑ.

(ТАСС).

Пӗрчӗлӗ тырӑсене 1.200 пин гектар ҫине ансӑр ретпе акмала

ССР Сойузӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Ейхе йулташ ҫуракинче пӗрчӗлӗ тырӑсене ансӑр ретпе 1.200 пин гектар талкӑшӗ ҫине акма план тунӑ. Чи пысӑк талкӑш ҫине—Украина—760 пин гектар, Сталинградпа Куйбышев облӑҫӗсем—45 пиншер гектар, Краснодар крайӗпе Оренбург облӑҫӗ—40 пиншер гектар, Воронеж, Ростов тата Саратов облӑҫӗсем—35 пиншер гектар т. ыт. те акаҫҫӗ.

Мартӑн 20-мӗшӗнчен кайа мар машин-тракторлӑ станцисен Камышченко йулташ системилӗ 4.000 трактор сейалки тата Коралов йулташ системилӗ 300 трактор сейалки илмеле. Ансӑр ретпе акакан сейалкӑсене чи малтан пӗрчӗлӗ тырӑсене выљӑх кӑшманӗ, ҫӗрмамӑкӗ акса туса илнӗ ҫӗр ҫинче, Сойузӑн Кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫри тата хӗвелтухӑҫри районсенче ҫуртырри акма таса, лайӑх сухаланӑ ҫӗртме ҫине ытларах акакан МТС-сене йараҫҫӗ.

Ҫӗрӗҫ органӗсен колхозниксене механиксене тата агрономсене ансӑр ретпе акакан сейалкӑпа ӗҫлеме хатӗрлӗме кӗске срукла курссем организацилемеле. Ансӑр ретпе акакан сейалкӑпа мӗнле ӗҫлемели ҫинчен ака ӗҫӗн ӑслӑлӑхла меслечӗсен институчӗ хатӗрленӗ инструкцийе массӑлла тиражпа кӑлараҫҫӗ.

Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ МТС-сен тата Совхозсен директорӗсемпе аслӑ агрономсене ансӑр ретпе акакан сейалкӑсемпе чи пысӑккӑн усӑ курма пур майсене те туса пама хушнӑ. Вӑл сейалкӑсемпе ҫумлӑ тата начар сухаласа сӳренӗ ҫӗр ҫинче, ҫӗртмене ҫуркуннe тунӑ ҫӗр ҫинче усӑ курма чарнӑ.

Папанин йулташӑн ушкӑнӗ вырнаҫнӑ пӑр ҫинче

Совет ҫӗршывӗн тӑватӑ паттӑрӗ—полљар тӗпчевҫисем вырнаҫнӑ пӑр ҫаплах Гренландин хӗвелтухӑҫ ҫыранӗсем хӗрипе куҫса пырать. Пӑр ванса пынӑ пулин те, хайулӑ тӗпчевҫӗсем ӑслӑлӑхлӑ сӑнавсем тума чарӑнмаҫҫӗ. Вӗсем ӑслӑлӑхлӑ сӑнавсен резуљтачӗсене йышӑннӑ срукра пӗлтерсех тӑраҫҫӗ.

Февралӗн 7-мӗшӗнче „Ҫурҫӗр полљусӗ“ станци ҫурҫӗр широтин 73 градус та 19 минутӗнче, хӗвеланӑҫ долготин 18 градусӗнче пулнӑ. Станцӑ районӗнче талкӑшпех пӗлӗтлӗ пулнӑ, ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ йенчен 4 баллӑ ҫил вӗрсе тӑнӑ, сивӗ 12 градус пулнӑ.

(ТАСС).



Папанин лагерӗпе „Мурманец“ суднo февралӗн 4-мӗшӗнче хӑш вырӑнта пулнине кӑтартакан картӑ.

Правителствӑ „Мурман“ пӑрҫӗмӗрене Папанин ушкӑнӗ вырнаҫнӑ пӑр патне йанӑ

„Ҫурҫӗр полљусӗ“ станци патне „Мурманец“ йатлӑ пысӑк мар карап, „Таймыр“ пӑрҫӗмӗрен кайаҫҫӗ—вӗсем, ӗнтӗ ҫул ҫинче. Ҫитес кунсенчех Ленинградран „Йермак“ пӑрҫӗмӗрен тухса кайать. Правителствӑ тата февралӗн 7-мӗшӗнче Папанин ушкӑнӗнчи паттӑрсене пӑр ҫинчен илсе тухма „Мурман“ пӑрҫӗмӗрене йанӑ. Ку пӑрҫӗмӗрен кӑмрӑк нумай илнӗ тата ултӑ уйӑхлӑх апат-ҫимӗҫ илсе кайнӑ.

„Мурман“ пӑрҫӗмӗрен ҫинче икӗ самољот пур: „Р-5“—йӗлтӗрлӗ тата амфиби „Ш-2“—пӑр ҫине те, шыв ҫине те ларма пултарать. Икӗ самољотне те карап трӳмне тийенӗ,—ҫапла ӗнтӗ, Баренц тата Гренланди тинӗсӗнче халљ те пит вайлӑ ҫил-тӑвӑл тӑрать пулин те, самољотсем ҫӗмӗрӗлес хӑрушлӑх пулмасть. Самољотсене „Мурман“ палуби ҫинче хӑвӑрт пуҫтарма пултараҫҫӗ,— ку ӗҫе самољотсем ҫинче вӗҫекенсем хӑйсем тата карап екипажӗ тӑваҫҫӗ.

„Мурман“ капитанӗ пулма И. Ф. Котцов йулташа уйӑрнӑ, вӑл Гренланди тинӗсне лайӑх пӗлет. Унӑн помошникӗ „Мурман“ капитанӗ В. Д. Ушаков йулташ. Пӑрҫӗмӗрен комиссарӗ пулма А. И. Пухов йулташа уйӑрнӑ.

„Мурман“ ҫине илнӗ самољотсем ҫинче вӗҫекенсем—И. Черевичный тата М. В. Карабанов йулташсем.

„Мурман“ пӑрҫӗмӗрен февралӗн 7-мӗшӗнче 13 сехет те 20 минутра Мурманскран тинӗсе тухса кайнӑ.

(ТАСС).

„Мурманец“ пӑрсемпе пӗрле куҫса пырать

Февралӑн 7-мӗшӗнче „Мурманец“ карапӑн капитанӗнчен Ульйанов йулташран радиограммӑ илнӗ. Вӑл—карапа пӑрсем хӗстерсе лартрӗҫ, хӗвеланӑҫ йенелле куҫса пыратпӑр, тесе пӗлтернӗ. Ульйанов йулташ пӗлтернӗ тӑрӑх, унта 12 баллӑ ҫил вӗрсе тӑрать. Йур ҫӑвать. Сивӗ 10 градус. Карапа пӑрсем хытах хӗстернӗ, анчах хӑрушлӑх ҫук.

***

„Таймыр“ пӑрҫӗмӗрен хӗвеланӑҫнелле кайса пынӑ ҫӗмӗн, ҫанталӑк условийӗсем йӑвӑрлансах пыраҫҫӗ. Февралӗн 7-мӗшӗнче, кӑнтӑрлапа, „Таймыр“ хӗвелтухӑҫ долготин 12 градус та 16 минутӗнче, ҫурсӗр широтин 72 градус та 37 минутӗнче пулнӑ. Ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ йенчен кас-кассӑн 7 баллӑ ҫил вӗрсе тӑнӑ. „Таймыр“ ҫинчи експедици руководителӗ Остаљцев йулташ пӗлтернӗ тӑрӑх: „Хумсем карапа 45 градус таран тайӑлтараҫҫӗ“ Ҫанталӑк йапӑхланнӑ пирки „Таймыр“ сехетре 3,2 милӗ анчах кайать. Пит вайлӑ ҫил-тӑвӑл витӗр ишмеле килет пулин те, карап ҫинче пурте йӗркелӗ.

(ТАСС).

„Ҫурҫӗр полљусӗ“ филљм Венара

ВЕНА, 7-II. Венара виҫҫӗмӗш ерне ӗнтӗ Совет ҫӗршывӗн „Ҫурҫӗр полљусӗ“ филљмне кӑтартаҫҫӗ. Ку филљма халӑх пысӑк интереспа йышӑнать; сеансем валљи билетсене йаланах малтан сутса пӗтереҫҫӗ. Хаҫатсем Папанин йулташ ушкӑнӗн ӑслӑлӑхла пысӑк ӗҫӗсене тата филљм илемлӗх тӗлӗшӗнчен хаклине паллӑ тӑваҫҫӗ. Кашни ернере тухса тӑракан „Арбейтер вохе“ йатлӑ журнал хӑйӗн йулашки номӗрӗнче ҫапла ҫырать:

„Папанин експедицин паттӑрла ӗҫне пӗтӗм тӗнче пысӑк тимлӗхпе сӑнаса пырать. „Ҫурҫӗр полљусӗ“ ӑслӑлӑхла станци тунипе вӗсем етемлӗх ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртрӗҫ. „Ҫурҫӗр полљусӗ“ филљм—вӑл вӗсен ӗҫӗ ҫинчен ӳкерне чаплӑ картинӑ, вӑл филљма кашни рабочийӗн тата служашчийӗн курмалла.

(ТАСС).

Ҫӗнӗ домнӑсем

МАРИУПОЛЉ, 7-II. Сӑтӑрҫӑсен йулашкийӗсене пӗтерсе, Серго Орджоникидзе йачӗпе тӑракан металлурги заводне („Азовсталљ“) тӑвакан рабочисем 3 №-лӗ ҫӗнӗ домнӑна хӑвӑрт туса пӗтереҫҫӗ. Тӑваттӑмӗш домнӑна тӑвас ӗҫе васкатаҫҫӗ. Ку икӗ кӑмака Совет Сойузӗнче чи пысӑкисенчен пӗрисем пулаҫҫӗ. Кашни домнӑ талккӑшӗ 1. 300 кубла метр, вӗсем талӑкра 1.500 тоннӑ чукун шӑратса кӑлараҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш томнӑна пӗтӗмӗшпех туса ҫитернӗ ӗнтӗ. Ӑна тӑваттӑмӗш кӑмака пекех кӑҫал ӗҫлеттерме тытӑнаҫҫӗ. Кӑҫалах „Азовсталљре“ 5 №-лӗ мартен кӑмакине тата йусакан завода туса ӗҫлеттерме тытӑнмала. 100 пин киловатлӑ теплоелектроцентраљ тӑваҫҫӗ. Вӑл електричествӑ вайне „Азовсталље“ ҫеҫ мар, Илйич йачӗпе, Куйбышев йачӗпе тӑракан заводсене те тата ытти предприйатисене те парса тӑрать.

(ТАСС)

КИТАЙРИ ВӐРҪӐ

ВАТАМ КИТАЙРА

ЛОНДОН, 7-II (ТАСС). Китайран пӗлтернӗ тӑрӑх, Тањцзињ—Пукоу чукунҫулӗн кӑнтӑр участкинчи Хуайхе йуханшыв районӗ халӗ те Китай ҫарӗсен аллинчех, вӗсем йапонецсемпе хирӗ-хирӗҫ артиллерирен персе тӑраҫҫӗ.

Китайран пӗлтернӗ тӑрӑхах, ҫав районта Китай ҫарӗсем хӗвелтухӑҫ йеннелле, Тањцзињ—Пукоу чукунҫулӗ патнелле, позицисем айккинчен наступлени тума пуҫланӑ. Наступлени тума вӗсем Нанкинпа Фын-Йан хушшинчи тӗмиҫе пунктсенчен тытӑннӑ. „Таймс“ хаҫатӑн корреспонденчӗ ҫапла паллӑ тӑвать: Китай ҫарӗсем ҫавӑн пек тунине пула йапонецсен унта пысӑк вӑй хума тивет тата вӑл йапонецсене ҫурҫӗрелле куҫма чарать.

ХАЊКОУ, 7-II (ТАСС). Хуайўањ хули районӗнче пысӑк ҫапӑҫусем пуҫланасса кӗтеҫҫӗ. Ҫав район вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчен пысӑк вырӑн йышӑнать. Китай командованийӗ шутланӑ тӑрӑх, Йапони ҫарӗсем Финўањрен (Фын-Йанран кӑнтӑртарах) ҫурҫӗрпе хӗвеланӑҫ йеннелле куҫмала. Йапони самољочӗсем фронт сывӑхӗнчи йалсем ҫине кашни кунах бомбӑсем пӑрахаҫҫӗ. Февралӗн 6-мӗшӗнче Йапонин тӑхӑр самољочӗ Шоҫуањ хули ҫине (Бенпуран хӗвеланӑҫнерех) темиҫе хутчен те пырса тапаннӑ.

Нанкинран кӑнтӑрти районра Китай ҫарӗсем контрнаступлени тума пуҫланӑ. Вӗсем Вањчжи хулине (Ухуран 20 километр кӑнтӑрала) ҫӗнӗрен йышӑннӑ. Китай ҫарӗсем ҫав Вањчжи хулине илнӗ хыҫҫӑн йапонецсем Фањчан ҫине (Ухуран кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫнелле) хытӑн атакӑлама тытӑннӑ. Ҫапӑҫусем Фањчанпа Уху хушшинче пыраҫҫӗ.

Чжецзйан провинцинче Китай ҫарӗсем февралӗн 6-мӗшӗнче йапонецсене Йӳйхан хулинчен (Хањчжоуран хӗвеланӑҫнелле) хӑваласа кӑларнӑ. Кайала чакнӑ чухне йапонецсем вӑрҫӑ хатӗрӗсене пит нумай пӑрахса хӑварнӑ. Цзйањтан йатлӑ йуханшывӑн ҫурҫӗр ҫыранӗнче Йапони ҫарӗсем вунӑ пин ҫын ытла шутланаҫҫӗ, вӗсем ҫав шыв урлӑ каҫма хатӗрленеҫҫӗ. Китай ҫарӗсем йышӑнса тӑракан Фуйан хули ҫине йапонецсем пырса тапаннӑ. Ҫапӑҫу кас пулаччӗнех пынӑ.

ЛОНДОН, 7-II (ТАСС). Рейтер агентствин Шанхайри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Йапони командованийӗ Тайху кӳлӗ районӗнче (Шанхайран кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫнеле) партизансене хирӗҫ кампани пуҫлани ҫинчен пӗлтернӗ. Йапони командованийӗн представителӗ шутланӑ тӑрӑх, партизансем вырӑнти халӑхран пысӑк пулӑшу илсе тӑраҫҫӗ. Йапони командованийӗн представителӗ: ҫав районти партизансен центрӗ Тайху кӳлӗ патӗнчи Тонтин утравӗ пулса тӑрать,—тесе каланӑ.

ҪУРҪӖР КИТАЙРА

ХАЊКОУ, 7-II (ТАСС). Шањси провинцинче йапонецсен тылӗнче партизансем йапонецсем ҫине кашни кунах тапанаҫҫӗ. Мыносйањ тата Йўсйањ уйесӗсенче (Тайуањрен ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫнеле) пысӑк ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Йапонецсем темиҫе пин салтак илсе пынӑ.

Февралӗн 4-мӗшӗнче Китай партизанӗсем Йапони салтакӗсем ҫине тапаннӑ. Йапони салтакӗсем Гоҫйањ — Йўањ (Шањҫи провинцин ҫурҫӗр пайӗ) ҫулӗ тӑрӑх грузовиксемпе (пурӗ 10 грузовик) кайнӑ пулнӑ. Йапонецсене пулӑшма Йўањпинран подкреплени пынӑ пулсан та, йапонецсен пурӗ пӗрех кайала чакмала тивнӗ. Кунти ҫапӑҫура йапонецсем сӗр ҫын ытла вилнӗ Партизансем Йапонин ултӑ грузовикне аркатнӑ тата винтовкӑсем нумай туртса илнӗ.

ЛОНДОН, 7-II (ТАСС). „Дейли телеграф енд морнинг пост“ хаҫатӑн Гонгонгри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, февралӗн 6-мӗшӗнче Жемчужнайа йуханшывӗ тинӗсе йухса кӗнӗ ҫӗрти утравсенче, Кантонран кӑнтӑртарах. Йапонецсем виҫӗ хутчен десант антарма хӑтланнӑ. Анчах Китай ҫарӗсем десант антарма чӑрмантарса тӑнӑ. Ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Йапони командованийӗ Формозӑ утравӗ ҫине вунпӗрремӗш дивизийе илсе пынӑ. Ҫав дивизийе кӑнтӑрти Китайра вӑрҫма илсе пынӑ пулмала, тесе шутлаҫҫӗ.

Йапони авиацийӗпе ҫар карапӗсем февралӗн 6-мӗшӗнче Гонгонг чикки ҫывӑхӗнчи Пањтоу хули ҫине ҫӗнӗрен пеме пуҫланӑ. Хула ҫине бомбӑсем пӑрахнипе Китай ҫыннисем Гонконга тарса пыраҫҫӗ.

Рейтер агентствин корреспонденчӗ Макаоран ҫапла пӗлтерет: февралӗн 6-мӗшӗнче Цйао утравӗ ҫине (Макаоран инҫех мар, Жемчужнайа йуханшывӗ тинӗсе йухса кӗнӗ тӗлте) Йапони карапӗсем ҫинчен салтаксем антарнӑ.

Англи правителстви Франко патне йанӑ нотӑ

ЛОНДОН, 7—II. (ТАСС). Рейтер агенстви пӗлтернӗ тӑрӑх, минстӑрсен кабинечӗн ларувӗ хыҫҫӑн, Англи правителстви Франко генерал патне Англи карапӗсем ҫине пӗрмайах пиратла тапӑннине хирӗҫ нотӑ йанӑ. Нота текстине, тет агенствӑ, Иден ку ыйту тӑрӑх общинӑсен палатинче зайавлени памасӑр пичетре кӑлармаҫҫӗ пулин те, Англи правителствӑ нотӑра малашне ҫавӑн пек пиратлӑ ӗҫсем шӗн чӑтма пултарайманнине уҫҫӑн кӑтартнӑ, тесе шутлаҫҫӗ.

Агротехникăна вĕренес ĕçе йертсе пымаççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Районри çĕрĕç пайĕн сводки тăрăх районра пурĕ 54 агрокружок ĕçлет (районĕпе пурĕ 90 колхоз). 54 кружокрай Буденный йачĕпе тăракан колхозра 6 кружок, Киров йачĕпе тăракан колхозра 9 кружок ĕçлеççĕ. Çапла вара, çĕрĕç пайĕн сводкине ĕненес пулсан, районра 41 колхозра агротехникăна вĕренес ĕçе йĕркеленĕ. Анчах сводкăна ĕненме йăвăр, мĕншĕн тесен сводкăсене кунта телефон тăрăх ыйтса çес çыраççĕ. Нумай кружоксем хут çинче кăна йашуланса тăраççĕ. Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра кружок организацилени виçĕ ерне те иртрĕ ĕнтĕ. Кружока 18 колхозник çырăннă. Райçĕрĕç пайĕнчи агроном Радионов пĕрре çеç мар колхозниксене занятие иртерме çак кунсенчех пыратăп, тесе шантарнă. Анчах шантарни сăмах çинчех йулат-ха.

Йадринори „XI лет Октября" колхозра кружока йанварĕн 10-мĕшĕнчех организациленĕ. Унта 40 колхозник çыраннă. Пайанхи куна çитсе кружокра пĕр занятие те пулман. Участкăри агронома, Аникин йулташа, колхозниксем виçĕ хут ĕнтĕ кружокра занятие иртерме чĕннĕ. Анчах Аникин колхоза пĕрре те пырса курăнман.

Йалрино йалсоветне кĕрекен ытти колхозсенче те çавнашкалах, агрокружоксем пачах ĕçлемеççĕ. Нумай çĕрте руководителсем çук пирки кружоксен ĕçĕсем чаранса тăраççĕ. Агрономсем кружок ĕçĕсем çине пачах çавăрăнса пăхмаççĕ.

Тури Ачакри, „Крестьянская газета" колхозри колхозниксем вăйлă тырпулшăн хĕрсех кĕрешеççĕ. Вĕсем агротехникă кăтартнă пек ĕçлесшĕн. Çавăнпа та вĕсем агрокружоксем организацилерĕç, анчах агрономсем пулман пирки çак кружоксенче занятисене виçĕ хут ĕнтĕ бригадирсем хăйсемех иртернĕ. Колхозниксем темиçе хут та агроном йама ыйтнă пулнă, çĕрĕç пайĕ пĕр агроном та йаман.

Çак факт райçĕрĕç пайĕ агротехникăна вĕрентес ĕçе йертсе пыманни çинчен пит уççăн кăтартса парат.

Çавнашкалах районри колхоз активне заочнă вĕрентес ĕç те пĕтсе ларнă. Ку ĕç мĕнле тăни çинчен райçĕрĕç пайĕнче никам та каласа пама пултараймаст. Йетĕрне райçĕрĕç пайĕ колхозниксене техникăна вĕрентес ĕçрен пачах пăрăннă.

П. Савандей.
Ник. Цветков.

Çĕрĕç пайĕ манса кайнă

Трак. Пĕтĕмĕшпе илсен, çуракине хатĕрленес йенĕпе район хаљ те йулса пырат. Суртлă вăрлăх улăштармали плана 50 процент, трийер витĕр каларса вăрлăх суртламали плана 87 процент тултарнă. Çавăн пекех йалхуçалăх машинисене йусас ĕçпе çĕре çемçетмелли йапаласене пухас ĕç те çителĕксĕр пырат.

Пуринчен ытла çĕрĕç пайĕ колхозниксене агротехникăна вĕрентес ĕç çинчен манса кайнă. Районĕпе пурĕ 250 çын агрокружока çыраннă пулнă, анчах та вĕсене никам та вĕрентмест. Агрономсем вăл ĕçрен паранна. Заочнай майпа вĕрентессинче те нимĕнле йĕрке те çук.

Çавăн пекех социалисăмла ăмăртăва та йертсе ымаççĕ. 100 колхозран 70 колхоз ăмăртăва хутшăннă шутланат, анчах чылайĕшĕн ăмăрту договорĕ хут çинче çеç.

М. Иванов.

Çулталăк отчотне тăвас ĕç йулса пырат

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йанварĕн 2-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх колхозсен çулталăк отчочĕсене февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермеле пулнă.

Шăхасан районĕнче çак постановленине пурнăçламаççĕ. Февралĕн 5-мĕшне районĕпе мĕн пурĕ те икĕ колхоз отчотне çеç çĕрĕç пайĕнче пăхса тухнă. (Туçи—Çармăс, Пушарпуç), 22 колхоз отчотне тĕрĕс туман пирки кайала йанă.

Отчотсене вăхăтра туманни колхоз счетоводĕсем отчот тума пĕлменнинчен те нумай килет. Çапла пулин те счетоводсемпе районра пĕр канашлу туна та, вĕсене пулăшас тĕлĕшпе урăх нимĕн те туман.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕнче отчот тăвас ĕçре колхозсене пулăшма районран шутĕç работникĕсене йама хушнă. Шăхасан районĕнче шутĕç работникĕсем сахал мар (финанс пайĕ, банк уйрăмĕ, хатĕрлев тата кооператсем организацисем). Анчах вĕсене пĕр колхоза та йаман.

Çакă вăл çĕрĕç пайĕпе МТС колхозсен çулталăк отчочĕсене вăхăтра туса пĕтерес ĕçе хакламаннинчен килет. МТСтанцин темиçе уйăх ĕнтĕ çак ыйтупа ĕçлемели инструктор-бухгалтер çук.

Соколов.

Колхозри драмкружок

Орининри „Красное Сормово" колхоз çумĕнче (Тутаркас р.) 12 çынтан драмкружок организациленĕччĕ. Иртнĕ çулхи декабĕрпе йанвар уйăхĕнче драмкружок членĕсем 6 спектаклĕ лартрĕç. Уйрăмăнах постановкăсенче Горшков, Акрамовскайа, Белкова йулташсем аван выљаççĕ.

Çитес кунсенчех „Улшăннă самана" пйесăна колхозсене тухса лартса пама хатĕрленеççĕ.

Ст. Павлов.

Кăташ йалсовечĕ йулма пуçларĕ

ЙЕТĔРНЕ. Кăташ йалсовечĕ чылай çулсем хушши районра малти вырăнта тăчĕ. Пур хуçалăхпа политикăлă ĕçсене те вăхăтра пурнăçласа пычĕ. Анчах йулашки вăхăтра районра кайри вырăна йулчĕ.

Йалсовет председателĕ пулса Абрамов, колхоз пурлăхне салатнăшăн 10 çуллăха тĕрмене хупмала тунăскер, кулак ывăлĕ, партирен кăларса ывăтнăскер, ĕçлет.

Йалсоветĕнче хута сахал пĕлекенсемпе хута пĕлменнисен шучĕ 120 çынтан та иртет. Вĕсене учота илсе пынисĕр пуçне нимĕн те туман. Çуркунне, пахча вырăпĕсене танлаштарнă чухне, Абрамов йалхуçалăх уставне пăсса, улмуççи лартам пекки туса 500 тваткăл чалăш ытлашши çĕр лаптăкне хайне валљи илсе йулат. Абрамовах йалти спекуљантсене Йарсолова, Абрамов Йегора спекуљаци туса çÿреме документсем туса панă.

Халĕ çуракине хатĕрленмеле. Кăташ йалсовечĕ колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшмаст. Йур тытас, вăрлăх суртлас ĕçсем, машинсене йусасси ытла та кайа йулса пыраççĕ.

Йалсовет секретарĕнче А. Данилов ĕçлет. Вăл революцилĕ саккуна пăснăшăн виçĕ хут суд умĕнче тăнă.

Културăлă секцине йертсе пыраканĕ—Митрофанов културă секцине салатса йанă. Митрофанов—раскулачит тунăскер.

Оборонă секци руководителĕ пулса А. Максимов ĕçлет. Вăл кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçсе ÿсĕрĕлсе çÿрет. Вăлах Кăташри „Пионер" колхозăн 1-мĕш бригадин бригадирĕ. Пĕр касхине ĕçсе Йершовă колхозницăна (коњуха) хĕнесе тăкнă. Кун пирки ĕçе Йетĕрнери халăх судне йанă.

Оборонă ĕçне вăл пĕтĕмпех салатса йанă. Йалсоветне кĕрекен йалсенче Осоавиахим организацийĕсем пачах ĕçлемеççĕ. Йалсовечĕн уй-хир, çулйĕр, финанс, вылљăх-чĕрлĕх секцийĕсен ĕçĕсем те курăнмаççĕ.

Ник. Цветков.

Пайшчиксен наказĕ пурнăçланмасăр йулчĕ

ШĂХАСАН. Матшу кооперативĕ иртнĕ çулта пайшчиксем парса хăварнă наказсене пурнăçласа пыраймарĕ. Пайшчиксем иртнĕ çул кашни лавкарах ăшă кăмакасем, жалăбă кĕнекисем, прейс-курантсем пулмала, тесе никаз парса хăварнă, пулнă.

Кооператив правленинче ĕçлекенсем колхозниксене валљи таварсене кирлĕ чухле илсе килсе тăратайман. Халĕ краççин çук. Ситцă, калуш, витре таврашсем ыйтаççĕ.

Матшу кооперативĕ Трак районĕнчи Албахтинă кооперативĕпе ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту договорне тĕрĕслемен.

Кадрсемпе ĕçлесси тата вĕсене вĕрентесси çителĕксĕр. Иртнĕ çулта кооператив пĕр счетовода вĕрентсе 800 тенкĕ пĕтерне, анчах унпа кооперативра усă курма пĕлмен, вăл 1—2 уйăх ĕçлесенех Çĕпĕре тухса кайнă.

Малгикас Шĕкĕрти лавкара Федоров 1931 çултанпах ĕнтĕ тавар сутат. Вăл иртнĕ çулхи таварçавăрнăш планне 140 процент ытла тултарнă. Федоров хăйĕн лайăх ĕçĕшĕн сахал мар премисем илнĕ.

Ĕççыннисен ыйтăвĕсем çине çийелтен пăхнă. Йалсовет председателĕ Тимофейев Матшу кооперативĕнчен витре, таз, т. ыт. илсе килме 2 хутчен ыйту панă. Унăн ыйтувĕ çине ку таринччене çавăрăнса пăхман.

Дм. Иванов.

Çесси ĕçĕсене вĕренеççĕ

Арапуçĕнчи колхоз шкулĕнне вĕренекенсем (Вăрмар районĕ) ССР Сойузĕн Аслă Совет Çесси материалĕсене вĕренме кружок организацилерĕç.

Йанварĕн 31-мĕшĕнче кружокра ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Ейхе йулташ Тĕпком пленумĕнче тунă доклада вĕрентĕмĕр. Занятисем йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Кружока Степанов йулташ йертсе пырат.

В. Григорйев.
М. Степанов.

Заочнă вĕренĕве татăклă йертсе пымала

Иртнĕ вăхăтсенче парти историне вĕренекен районри заочниксем 3 кунлă конференцийĕсем йĕркелĕ иртеймен. Хăшĕ пĕрисем конференцине хатĕрленмесĕр пынă. Радиолекцисене те йĕркелĕ итлемен. Уйрăм заочниксем, уйрăмах Скворцов, Новиков, Шишокин, Колцов коммунисем заочнă вĕренĕве хакламан.

Халĕ парти райкомĕ заочнă вĕренÿ мĕнле пыни çинчен райком ларура ыйту лартат. Нумайах пулмаст райком заочнă йенĕпе ĕçлекен райком инструкторĕ Кузьмин йулташ тата вĕренме йĕркелĕ çÿремен Скворцов, Новиков Шишокин, Колцов, коммунис, информацийĕсене итлерĕ, вĕсене татăклă кăтартусем пачĕ.

ПСК(б)П Шăнкăртам райкомĕ заочнă вĕренÿпе татăклă йертсе пыма тытăннă хыççăн вĕренÿ ĕçĕ лайăхланни палăрат. Ку йулашки виçĕ кунлă конференцин ĕçне илсе пăхсан та лайăх курăнат. Конференцире 20 çын пулчĕ. Кашнийех темăна лайăх хатĕрленсе пынă, конспектсем çырнă. Конференци те активлăн иртрĕ. Кашнийех тухса каласшăн, уйрăмах Иванов, З. Флизов, Г. Флизов конференци ĕçне активлăн хутшăнчĕç. Вĕренÿ пахалăхĕ те чылай лайăхлашни палăрат. Заочниксем 6 çын—отлично, 4 çын—лайăх ытисем вăтам отметкăсем илчĕç. Шăнкăртам районĕнчи заочниксем республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнассишĕн кĕрешеççĕ.

Кужиков.

Канаш райкомĕ заочниксем çинчен маннă

Канаш районĕнчи парти историне заочнă вĕренекенсен группинче 21 çын шутланса тăрат. Анчах пĕр конференцинче те 21 çын пулман. Малтанхи конференцинче 15 çын пулнă, иккĕмĕшĕнче 14, виççĕмĕшĕнче 8—13 çын тата ытти те.

Заочнă вĕренÿ ĕçне Михайлов — райçĕрпай пуçлăхĕ, Николайевпа Разумов йулташсем кайала туртса пыраççĕ. Вĕсем икĕ конференцинче пулман. Петров заочник пĕр конференцинче те пулман. Ухватов заочник иккĕмĕш конференцинче çеç пулнă, унта та вăхăтра пыман.

Парти райкомĕ Канаш районĕнче заочниксем пурри çинчен мансах кайнă. Вăл заочнă вĕренÿ çинчен райкомра сÿтсе-йаватнăр, тесе вăхăта тăсса пурăнат, анчах ку таринчен пĕр заочнике те райкома чĕнмен. Паллах, çакăн хыççăн вĕренÿ пахалăхĕ çинчен мĕн каламалли пур. Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи институт паракан радиолекцисене итлес ĕçе ку таранччен йĕркелемен. Райкомăн заочнă йенĕпе ĕçлекен инструкторĕ мĕн тăват-ши?

Магуçкин.



ХĔРЛĔ ÇАРПА ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔ 20 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТĔЛЕ.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Совет Сойузĕн Маршалĕ С. М. Буденный". Т. Сироткин фотоÿкерчĕкĕ. (Фотоискусствăн Пĕтĕм Сойузри 1-мĕш выставки).
Сойузфото репродукцийĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарас умĕн

Лайăх хатĕрленсе пыратпăр

Канашри Н. А. Доброљубов йачĕпе тăракан педучилищăра вĕренекенсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă уйава хатĕрленме тытăнчĕç. Ку тĕлĕшпе хор, физкултурă кружокĕсем организиленĕ. Хор кружокĕ „Партизанская", „Конноармейская", „Казачья песня". „Москва" т. ыт. йурăсене те йурлама вĕренчĕ, халĕ оборонă йуррисене йурлама вĕренет.

Çак кунсенче 206 çын „ПВХО", 169 çын „ГСО", 60 çын „Ворошиловский стрелок", 26 çын „ГТО" значокĕсене илчĕç. Хăшпĕр студентсем: Бабайев, Г. Йефремов, З. Никитин, А. Зайцев, Йанбашева—4-шер оборонă значокĕсене илме нормăсем пачĕç.

Хĕрлĕ Çар кунне вĕренÿри пысăк пахалăхсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешетпĕр. Ку тĕлĕшпе пирĕн класпа клас тата студентсем хушшинче социалисăмла ăмăрту саралса пырат.

Социалисăмла ăмăртува тухса педучилищăра вĕренекенсем хăйсен вĕренÿ пахалăхне куллен ÿстерсе пыраççĕ. Иккĕмĕш „В" класра вĕренекен П. Ванин виççĕмĕш чĕрĕкре пур предметсемпе те „отлично" тата „хорошо" паллăсем кăна илме пулчĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле йатарласа стена хаçачĕсем кăларма хатĕрленетпĕр. Халĕ Хĕрлĕ Çар çинчен калаçусем туса иртеретпĕр. Чи лайăх вĕренсе пыракан студентсем: М. Семенова, П. Алексейева, Н. Семенов комсомол ĕретне кĕчĕç. Вĕренÿ çулĕ пуçламĕшĕнче 63 комсомолец пулнă пулсан, пайанхи куна 102 комсомолеца çитрĕ.

Ернере икĕ кун кашни классенчех политинформацисем туса иртереççĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн постановленине вĕренеççĕ. Кружоксене комсомолец-активиссем йертсе пыраççĕ.

Пав. Николайев. П. Петров.

Значоксем илме нормăсем параççĕ

Çĕрпÿри фельдшерсен шкулĕнчи студентсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă уйава хатĕрленеççе. Осоавиахимпа Хĕрлĕ хĕрес организацийĕсем пуçарнипе пĕрремĕш курсри студентсене „ГСО" тата „ПВХО" значокĕсен нормисене пама кружоксенче вĕрентме тытăнчĕç. Февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне значок нормисене парса пĕтерессишĕн ăмартса ĕçлеççĕ.

Пурĕ 6 кружок ĕçлет. Драмкружок пйеса лартма хатĕрленет. Литкружок йатарласа „Литературăшăн" журнал кăларат.

К. Михайлов.

Спектаклĕ лартма хатĕрленеççĕ

Йÿçкассинчи (Елĕк р.) вăтам шкулри драмкружок февралĕн 2-мĕшĕнче П. Осипов çырнă „Айдар" пйессă лартрĕ. Спектаклĕ курма 500 çынна йахăн пычĕç. Халĕ драмкружок Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ çирĕм çул тултарнă тĕле спектаклĕсем лартма хатĕрленет.

Н. Йаковлев.

Облигацисене алла илчĕç

КÿКЕÇ. Мăштавăшри „Самољот" колхоз членĕсем займа 25-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ку вăхăта займ укçине пĕтĕмпех пухса çитерчĕç. Займ облигацийĕсене алла парса тухрĕç.

Мартйанов.

М. ШОЛОХОВ

ЛĂПКĂ ДОН

(Виççĕмĕш сыпăк)

Вăйăран Кĕркури малтанхи автансем авăтнă хыççăн тин таврăнчĕ. Çенĕхрен йÿçĕхсе кайнă хăмлапа турамĕш курăкĕн хĕрхÿ шăрши персе тухрĕ.

Кĕркури чĕввĕн утса курницăна кĕчĕ, салтăнчĕ, праçникре тăхăнмали лампаслă шăлаварне тирпейлĕн пăтана çакрĕ, сăхсăхса илчĕ, выртрĕ. Урайĕнче — чÿрече решеткин хресĕпе касăлăнса выртакан ылттăн уйăх мĕлкийĕ тăрат. Кĕтесре, тĕрленчĕклĕ питшăллисем айĕнче,—кĕмĕл турăшсен тĕксĕм йăлтăрки, кроват çинче хуйхăнса кайнă шăнасем сĕрлесе тăраççĕ.

Тĕлĕрсех кайнăччĕ, анчах кухњăра пиччĕшин ачи макăрса йачĕ.

Сĕрмен урапа пек сăпка чĕриклетме тытăнчĕ. Тарйе ыйхăлă сасăпа мăкăртатса илчĕ:

— Лăплан, йурăхсăр йапала! Ни ыйăху çук санăн, ни канăçлăху çук.

Унтан шăппăн кăна йурласа йачĕ:

Шăхличă, шăхличă,
Ăçта есĕ пултăн?
Утсене сыхларăм.
Мĕн сыхласа тупрăн?
Çĕр ылттăн пек çилхелĕ,
Йĕнерленĕ ут тупрăм...

Кĕркури, пĕр виçелĕн ĕнĕрешекен сасăпа тĕлĕрсе кайса, çакна аса илчĕ: „Ыран Петран лагĕре тухмала вĕт-ха. Дашкă ачипеле йулат... Унсăрăнах утă çулма тивет, имĕш".

Вĕри минтер айне пуçне чиксе выртрĕ. Хăлхана, йăлăхтарулă сасă сăрхăнат:

Санăн утÿ ăçтарах?
Хапха хыçĕнче тăрат.
Хапхийĕсем ăçтарах?
Шыв йухтарса кайнă.

[illegible]

йани вăратрĕ. Вăл сассинченех ку лаша Петĕрĕн стройра çÿремели учĕ иккенне уйăрса илчĕ.

Ыйăхпа хĕвтесĕрленнĕ пÿрнисемпе нумайччен кĕпе тÿмисене тÿмелесе аппаланчĕ, чĕтренсе йухакан йуррăн кĕввипе каллех çывăрса кайнă шекех пулчĕ.

Хур-акăшсем ăçтарах?
Хăмăшлăха пытаннă.
Хăмăшлăхĕ ăçтарах?
Хĕрсем вырса пуçтарнă.
Хĕрĕсем ăçтарах?
Качча тухса кайнă.
Казакĕсем ăçтарах?
Вăрçа тухса кайнă.

Кĕркури, ыйхăпа аисухланăскер, вите патне сулланса çитрĕ, утне тăкăрлăка çавăтса кăларчĕ. Пите çилпе вĕçсе килнĕ ерешмен карти кăтăкласа илчĕ те унăн ыйхи кĕтмен хутранах иртсе кайрĕ.

Дон шывĕ тăрăх уйăх çутийĕ айĕн никам çÿремен ампăс-тĕмпĕс çул выртни курăнат. Дон çийĕнче—тĕтре, а çÿлтÿпере çăлтăрсем вир шĕрчи пек сапаланса выртаççĕ. Шыв хĕррине анмали çул пиçĕ шачар. Лаша Кĕркури хыçĕнчен питĕ асăрхавлăн пускаласа утат. Леш йенче кăвакал асчи сырăн сывăхĕнчен, наймака ăшĕнчен, вак-тĕвек пулăсене хураллакан сом вăрăнса тухрĕ те, хÿрипеле шыва çапса хăварчĕ.

Нумайччен тăчĕ Кĕркури шыв хĕрринче. Нÿрĕ те усă шăршăлăн сывлат йухан шыв хĕрри. Лаша тутинчен вак тумламсем тумлаççĕ. Кĕркурин чĕринче çăмăл та пылаклă тунсăх. Ырă та—нимĕн шухăш та çук. Таврăнăçăн Кĕркури хĕвелтухăçĕ çине пăхрĕ. Унти сенкер-кăвак

[illegible]

Вите умĕнче Кĕркури амăшĕ çине ситсе тăрăнчĕ.

— Гришкă, есĕ-и?

— А кам пултăр-ха тата?

— Лашана шăвартăн-и?

— Шăвартăм,—терĕ Кĕркури йулхавлăн.

Амăшĕ, кайала суланса, сашан çийĕпе затона кизексем çĕклесе кайат ,ватăлса хĕвтесĕрленнĕ çара урисемпе кăштăртаттарса утат.

— Астахăвсене кайса вăратăсăнччĕ. Степанĕ пирĕн Петĕрпе пĕрлех кайма хатĕрленетчĕ.

Ирхи сулхăн Кĕркурийе ăшне çирĕп пружин лартнă майлăн чĕтретет. Уçĕ тăрăх чикенсем сĕрхĕлтетсе чупаççĕ. Виçĕ картлашка тăрăх хăпарса Астаховсен йанăравлă крылцине чупса кĕрет. Алăкне питĕрмен. Кухњăра тĕртсе тунă кавир çинче Степан çывăрат, хулхушшинче хăйĕн арăмĕн пуçĕ.

Сайралнă тĕттĕм витĕр Кĕркури Укçинен чĕркуççирен те çÿлерех усăлса кайнă кĕпине йĕркесĕр сарса йанă хурăн хуппи пек шурă урисене курат. Вăл хăйĕн çавар ăшчикки йепле типнипе чукун пек йанăракан пуçĕ йепле йăвăрланнине туйса, пĕр самант хушши пăхса тăрат. Кусĕсене выљатса унăн-кунăн пăхса илчĕ. Такамăнни пек сасăпа урмăшăн сăмах чĕнчĕ:

— Ей, çыннисем пур-и кунта? Тăрăр! Укçине ыйхăран мĕшĕлтетсе вăранчĕ.

— Ой, кам кунта? Кам ку?—Унăн çара алли, кĕпине турткаласа, вĕткеленчĕкĕн урисем тăрăх хыпашласа илчĕ. Минтерĕ çине çывăрнă чух йухнă сĕлеке пăнчи тăрса йулчĕ: çирĕп хĕрарăмăн ирхи ыйхи.

— Ку епĕ. Анне йачĕ сире вăратма...

— Епĕр халех... Кунта пирĕн иртме те çук... Пăрçасем аптăратнăран урайĕнче çывăратпăр. Çтепан, тăр, илтетĕн-и?

Кĕркури Укçинене аван марри калаçнинченех сисрĕ те васкаса тухса кайрĕ.

Май уйăхĕнчи лагĕре хутăртан пĕр вăтăр казака йахăн каймала. Пухăнмали

[illegible]

патне брезент будкăла поводкăсем, çуран тата йуланутлă казаксем пухăнма пуçларĕç. Хăйсем чĕрĕ пиртен çĕленĕ çуллахи кĕпесемпе, пĕтĕм хатĕр-хĕтĕрĕпе.

Петро крылца çинче васкаса тăтăлса кайнă чумбура çĕлесе тăрат. Пантелей Прокофйевич Петро лаши патĕнче тĕрткеленет, вăлашка ăшне сĕлĕ сапса панă май кăшкăркаласа илет:

— Дуњаша, сухари чикрĕн-и? А салана тăвар сапрăн-и?

Дуњаша, пĕтĕмпе хĕремесленсе кайса тара ÿкнĕскер, апат хатĕрлемели пÿлĕмпе курен хушшинче чĕкеç пек йаранса çÿрет, ашшĕ кăшкăрса чĕннисене хирĕç кулкаласа таврат:

— Есĕр, атте, хăвăр ĕçĕре майлаштарăр, а епĕ пиччене Черкасскине çитийех таврăнмасла хатĕрлесе парăп.

— Çисе йамарĕ-и-ха?—лаши çине кăтартса ыйтрĕ Петро, смалаланă çипе сурчăкпа йĕпетсе.

— Чăмлат,—таврчĕ ашшĕ васкамасăр, кăштăрка аллаппийĕпе йĕнер кĕççине хыпашласа. Кĕççе çумне пĕчĕкçеç йапала—пĕр-пĕр çÿпĕ йе тĕпренчĕк кăна лексессĕн те, вырăна çитсе ÿкиччен лаша çурăмне чĕп-чĕр йун пуличчен шăйăрса пăрахат.

— Çисе йарсан, кайса шăварăр, атте, тур лашана.

— Гришкă Дон хĕррине илсе кайĕ. Ей, Кĕркури, çавăтса кай лашана.

Çамки çинче шур çăлтăрлă, çÿлĕ çамрăк сар лаша выљаса аппкăнкаласа утат. Кĕркури ăна калиткă хыçне илсе тухрĕ, —сулахай аллипе кăшт кăна ун çилхинчен тытса вăштах сиксе утланчĕ те, вырăнтан тапранса, усă йуртăпа йурттарчĕ. Çыр хĕррине аннă чух ăна чараспăнччĕ вăл, анчах лаши ураран ăташса хăвăртлама пуçларĕ, унтан анатала сиккипе анса кайрĕ. Кĕркури лаша çурăмĕ çине выртнă пекех кайала кайса ÿкрĕ те анатала витреçем йăтнă хĕрарăм аннине асăрхарĕ. Кĕркури лашине сукмакран пăрчĕ те, асăр-писĕр çĕкленĕ тусан пĕлĕтне хăваласа иртсе кайса, шыва кĕрса тăрăнчĕ.

15

Сăрт çинчен Укçине тайкаланса анат. Катаранах çăвар тулли кăçкăрса йачĕ:

— Шăпăрлан çури, мĕн урнă пек çÿретĕн? Кăштах лашапа таптатмарăн. Тăхтаха ак, асуна каласа парам ес йепле çÿрени çинчен.

— Но-но, ан йатлаç, ес, кÿршĕ. Асатăн ак упăшкуна лагĕре, тен еп те хуçалăхра кирлĕ пулăп.

— Шуйттана кирлĕ есĕ мана!

— Утă вăхăчĕ пуçлантăр-ха, хăвах пырса тархаслăн,—кулса йачĕ Кĕркури.

Укçине кĕпер çинчен картлă кĕвентепе çăмăллăн пĕр витре шыв ăсса илчĕ те, çилпе каранса тăракан йупкине ик чĕркуççийĕпе хĕстерсе, Кĕркури çине пăхрĕ.

— Йепле, сан Степану хатĕрленчĕ-и? —ыйтрĕ Кĕркури.

— Сана мĕн ĕç?

— Тепле çын пулнă ес... Ыйтма та йурамаст-ши вара?

— Хатĕрленчĕ. Унтан мĕн?

— Желмаркă пулса йулатăн пулат апла?

— Апла-тăк, çапла.

Лаша шыв çинчен пуçне çĕклерĕ, тутинчен йухакан шыва чăмлакаларĕ, унтан, Донăн леш йеннеле пăхса, малти урипеле шыва кукалесе илчĕ. Укçине тепĕр витрипе те шыв ăсрĕ: картлă кĕвентине хулпуççи урлă уртса йарса, çăмăллăн тайкаланарах утса сăрт çинеле улăхса кайрĕ. Кĕркури ун хыçĕнчен утне уттарчĕ. Çил Укçинен йупкине вăркăштарат, хăмăр ÿтлĕ мăйĕ çинчи мамăк пек кăтра çÿç пайракисене выљантарат. Йăвăр чăмăрка туса тĕвĕлесе хунă çÿçĕ çинче пурçăн çиппеле тĕрленĕ лентă çулăмланса йĕлкăпат, хĕрлĕ кĕпи, йупкă ăйне чикнĕскер, нимĕн пĕркеленмесĕр, унăн тÿрĕ çурăмĕпеле шăратса йанă пек хулпуççийĕсене çăтă-çăтă тытса пырат. Укçине тăвала малала чикĕнсе утат, унăн кĕпи айĕнчен çурăмĕ тăрăх анакан лупашка йĕр уççăнах палăрса выртат. Кĕркури Укçинен хулĕ айĕнчи тарпа исленсе тĕссĕрленнĕ хăмăр лаптăксене курчĕ, унăн кашни хуçканусне куçпа сăнаса ăсатрĕ. Унăн Укçинепе сĕнĕрен сăмах хускатса йарасси килсе кайрĕ.

— Упăшкусăр тунсăхлама пуçлăн-ха ак? Е?

— Укçине утнă хутранах пуçне çаварса пăхрĕ, сасăсăр кулса илчĕ.

— Унсăр йепле пултăр-ха? Есĕ ак авлан,—сывлăш çавăрса илсе, сăмахне таткаласа калаçма пуçларĕ вăл,—авлан, кайран вара хăвах пĕлĕн, тунсăхлаççĕ-и савнă тус пирки йе çук-и?

Кĕркури лашине тĕртсе унпала танлашрĕ те унăн куçĕнчен пăхрĕ.

— А хăшпĕр арăмсем упăшкисене ăсатсан савăннă пек пулаççĕске? Пирĕн Тарйе Петро çук чухне самăралма тытăнат.

Укçине, сăмса шăтăкĕсене выљантарса, хыттăн сывласа илчĕ; çÿçĕсене тÿрлетсе, çапла таврчĕ:

— Упăшка вăл—çĕлен мар, çапах та йун ĕмет. Сана час авалантаратпăр-и-ха?

— Пĕлместĕп, атте мĕн тăвĕ. Службă хыççăн пулĕ.

— Çамрăк-ха есĕ, ан авлан.

— Мĕншĕн?

— Ним ырлăхсăр йапала.—Куç айĕпеле пăхрĕ вăл; тутисене уçмасăрах, хĕрхенсе кулнă пек кулса илчĕ.

Вара пирвайхи хут асăрхарĕ Кĕркури унăн тутисем çăтлăх та кĕпшек иккенне.

— Кăмăлăм çук авланмашкăн. Кам та пулин каплах та йуратĕ.

— Ай куç хывса хутăн-и?

— Мĕн куç хывмала вара манăн?.. Ак ес ăсатса йаратăн Степана...

— Ес манпа пĕлсе калаç!

— Хĕнесе тăкатăн-им?

— Степана каласа парап.

— Еп сан Степанна...

— Асту, йĕкĕт, куççуљ йухĕ.

— Ан хăрат, Укçине!

— Еп хăрамастăп. Санăн ĕçÿ хĕрсемпе апкăнасси. Ан тив сана пит-тутрисĕм тĕрлесе паччăр, а ман çине ан тинкер.

— Йурийех хытă пăхатăп.

— Пăхса тăрах еппин.

Укçине, çурасна пек пулса йăл кулчĕ,

Вăрман хатĕрлевĕнче болъшевикла йĕрке тумала

Йанварпе февраљ уйăхĕсем кварталти вăрман хатĕрлев планне тултарассине татса паракан уйăхсем пулса тăраççĕ. Çавăнпа та вăрманта ĕçлекенсен шучĕ те нихçанхинчен ытларах пулмала. Анчах мĕнле ĕçсем пыраççĕ-ха. Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрманпунктĕнче? Калас пулат, ўрĕк-сўрĕк çеç ĕçлесе пыраççĕ. Квартал планне февралĕн 5-мешĕ тĕлне касса хатĕрлессипе 20,7 процент, турттарассипе 29,3 процент çеç тултарнă.

Вăрманпункчĕ начар ĕçленин тĕп сăлтавĕсем вăрманта ĕçлекенсене ваљљи çителĕклĕ таран услови туса паманнинче. Хватерсем çителĕксĕр, пуррисем те кирлĕ пек йĕркелĕхре мар. Вĕретнĕ шывсем нихăш çуртра та çукпа пĕрех. Мысłец вăрман цехĕнче сивĕ шыва та вăхăтра тăратаймаççĕ. Ĕçсе-çимели хатĕрсем (стакансем, кашăк-чашăксем т. ыт. те) çук. Ĕçлекенсем пĕр куркăпах ĕçсе-çиеççĕ. Сĕтел, пукансем сахал.

Вăрманта кашни кун 560 çын çуран, 507 çын лашапа тата 22 трактор, 4 автомашина ĕçлемеле. Çаксем ĕçленипе вăрманпунктĕнче 1333 кубла метр вутă касса хатĕрлесе 923 кубла метр турттармала. Ĕçлекенсен шучĕ хăшпĕр кун планпа кăтартнинчен иртсе кайат. Февралĕн 4-мĕшĕнче вăрман каснă çĕрте 577 çын, турттарнă çĕрте 384 çын ĕçленĕ, çапах план çурри те тулман. Мĕншĕн тулманни паллă, рабочисен ĕçне тĕрĕс йĕркелемен кунта. Ĕç хатĕрĕсем çитмеççĕ. Спиридонов калана тăрăх, 300 пуртă, 300 пăчăкă, 1500 măшăр алса т. ыт. те кирлĕ. Вĕсемсĕр ĕçлеме çук. Анчах çапах та кирлĕ ĕçхатĕрĕсене тупассипе васкаса ĕçлени курăнмаст. „Шырасан та тупаймастпăр" теççĕ руководителсем. Çав вăхăтрах Канашри базăра, пуртă таврашсем темĕн чухлех. Кирлĕ пайсем çук пирки 4 трактор, 4 автомашинă ĕçлемесĕр лараççĕ.

Куљтмассăлă ĕç пирки çакна çеç каламала. Профсойуз организацийĕ (рабочком председателĕ Осипов) хĕрлĕ кĕтессем уçса хаçат-журнал çырăнса илнипех чарăнса ларнă. Рабочисем хушшинче калаçусем туса иртермеççĕ, уйăрнă агитаторсем ĕçлемеççĕ. 34 мĕш баракра пурнакансем çумне çирĕплетнĕ Алљакин комсомолец рабочисем хушшинче пĕрре те пулман, çав вăхăтрах ку баракра хаçат-журналсем те, шашкă-шахмăтсем те памаççĕ. „Пирĕн пата ку таринчен никамах та килсе пăхман, епĕр мĕнле пурăннине пĕлмеççĕ. Епĕр пурнăçран йулса пыратпăр, хаçат-журнал памаççĕ, калаçусем те туса иртерни пулман" теççĕ рабочисем.

Хут çинче 9 хĕрлĕ кĕтес шутланат. Анчах ĕçлекенсем çурри те çук. Рабочком работникĕ Алендейев хĕрлĕ кĕтессен пуçлăхĕсене те пĕлмест. Мĕншĕн тесен вăл ниçта та тухса çўремест. 4-мĕш складра радио ĕçлеме пăрахни уйăх ытла ĕнтĕ, хаçат-журналсем те пырса памаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан баракра нимĕнле куљтмассăлă ĕç те курăнмаст. Çапах Алендейев ку хĕрлĕ кĕтесе аван ĕçлекен хĕрлĕ кĕтессен шутне кĕртет. Мĕн каламалли пултăр ĕнтĕ ытти çĕрти хĕрлĕ кĕтессем çинчен? Факсем куç умĕнчех.

Паллах, çакăн пек йĕркесĕр ĕçленĕ çĕрте стахановла йухăм та вăйланма пултараймаст. Кунта халăх тăшманĕсен йулашкийĕсене пĕтерессипе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Йулашки вăхăтра уйрăмăнах ĕçре çемçелĕх, шăплăх сарăлни сисĕнет. Пухусенче вумай каласса вăрăм резољуцисем йышăнаççĕ, конкретлă ĕç, тунă ĕçе тĕрĕслесси курăнмаст.

Партипе профсойуз организацийĕсем стахановла йухăма йертсе пымаççĕ. Рабочком председателĕнчен—Осиповран „халљхи вăхăтра миçе стахановец, хăш колхоз аван ĕçлет?" тесе ыйтсан, „пĕлейместĕп учота илмен" тесе çеç ответлет. Çавăнпа та вăрманпунктĕнче миçе стахановец ĕçленине тĕплĕн пĕлекен çук. Парти организацийĕ профсойуз çине, профсойуз организаци администраци çине йăвантараççĕ. Администрацинче ĕçлекенсенчен те пĕлекенсем çук.

Вăрманпунктĕнче стахановла бригадăсем, малта пыракан колхозсем сахал мар. Пăрачкав районĕнчи „Победа" колхоз вăрманта ĕçлессипе чи малта пырат. Колхоз вăрман хатĕрлемели çулталăкри плана çак февраљ уйăхĕнчех тултарассишĕн кĕрешет. Колхозăн уйрăм бригадăсем ĕçлеççĕ. Ĕçе лайăх организациленĕ май, Михаил Кротиков бригади кашни кунах хăйĕн планне 423 процент, Василий Кожевников бригади 408 процент тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем çак февралĕн малтанхи пилĕккунлăхĕнче плана 300 процента йахăн тултарчĕç. Çаван пекех вăрман касакан Н. Архипов, В. Лешчанăв, А. Варжин йулташсен бригадисем кулленхи нормăсене 300—330 процент тултарса ĕçлеççĕ. Анчах вĕсене пĕлекенсем çук, вĕсемпе ĕçлемеççĕ.

Çĕмĕрле вăрманпункчĕн ĕçе лайăхлатма пысăк условисем пур. Руководителсен рабочисем хушшинче ытларах пулмала.

Хар. Лисин.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Куславкка комбинатĕнчи стахановка-комсомолка Петухова Вера. Станок çинче ĕçлесе нормăна 170 проц. çити тултарат.

Цыганов фото-ўкерчĕкĕ.

Айăпсăр çынна айăплакансем

Тутаркас районĕн кивĕ руководстви парти членĕсене, кандидатсене вĕрентсе ўстерес вырăнне, вĕсене вырăнсăр йатлаçса, кирлĕ-кирлĕмаршăнах парти ретĕнчен кăларса сирпĕтнĕ. Ку Сорокин йулташăн ĕçĕнче лайăх курăнат. Чунсăр бўрократсем ним айăпсăрах Соркин йулташа партирен кăларса сирпĕтнĕ. Кам вăл Сорокин?

Сорокин Петр Тимофейевич 1909 çулта Орбаш йалĕнче (Тутаркас р.) чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Килте çиме çитмен пирки Сорокин йулташ çамрăклах кĕтў кĕтсе пурăнат. 16 çула çитсен Çорокин Урал тăвĕсем çине ĕçлеме тухса кайат. Унта ултă çул хушши ĕçлет. Унтах 1930 çулта партине кĕрет. Кун хыççăн Хĕрлĕ Çара кайат. Унта кандидатран парти членне куçат. Хĕрлĕ Çартан кĕçĕн командир пулса таврăнат. 1934 çулти йанвар уйăхĕнче Сорокин йулташ ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ çумĕнчи марксисăм-ленинисăм курсĕнче вĕренсе тухат.

Парторг пулса ĕçленĕ троцкис Йеремейев Сорокин йулташ çинчен елек сарма тытăнат. 1937 çулти йанвар уйăхĕнче парти пухувĕнче ним айăпсăрах Сорокин йулташа партирен кăларса пăрахаççĕ. Çакăн хыççăн та Сорокин йулташ хăйĕн аллине усмаст. Вăл тракториссен курсĕнчен вĕренсе тухат те, çавĕпех тракториссен бригадирĕ пулса ĕçлет. Вăл кунта та хăйĕн пултарулăхне кăтартат. Унăн бригади пур ĕçпе те малти вырăна тухат.

Сорокин йулташ тем чухлĕ лайăх ĕçлеме тăрăшнă пулсан та, хулăм тирлĕ ПСК(б)П райком секретарĕ пулнă Иванов çавна шута илмен. Вăл парти членĕсем çине формаљнă-бўрократла пăхнă. Парти Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнчи пленумĕ хыççăн çеç парти райкомĕ хăйĕн йăнăшĕсене тўрлетме тытăннă. Февралĕн 1-мĕшĕнче райком секретарĕ Анисимов йулташ Сорокин йулташа парти билетне таврса пачĕ.

Кун пек ним айăпсăр парти билечĕсене туртса илсе, çунман шкафа питĕрсе хуни татах пулнă. Кашмашри Бычков йулташа та партирен тĕрĕс кăларман. Унтан та ытларах, Йувановăри кандидат группинчи Соколов кандидатăн, кандидат картăчкине ним сўтсе—йавмасăрах туртса илнĕ. Ват мĕн хăтланнă райком секретарĕ пулса ĕçленĕ Иванов. Халĕ Тутаркас ПСК(б)П райкомĕ йăнăшсене тўрлетме тытăннă.

Бирйуков

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Куславкка комбинатĕнчи стахановла цехăн начаљникĕ Королев Василий Александрович. Комбинатра 1933 çултанпа ĕçлет, ПСК(б)П членĕ.

Цыганов фото-ўкерчĕкĕ.

Изедеркăри туллимар вăтам шкулăн ĕçĕ

ЕЛĔК. 6 çул хушшинче Изедеркăри туллимар вăтам шкултан пĕтĕмпе 96 ача вĕренсе тухнă. Вĕренсе тухнисенчен халĕ чылайĕшĕсем вăтăм, аслă шкулсенче вĕренеççĕ.

Кăçалхи вĕренў çулĕнче 200 ача вĕренет. Кăçал шкул тепĕр кăларăм хатĕрлет. 7-мĕш класран 41 ача вĕренсе тухмала. Халĕ 7-мĕш класри кашни ачах вĕренўре", „отлично" „хорошо" паллăсем илессишĕн пĕрпĕрinpe ăмăртаççĕ. Вĕренўре Михайлов, Йегоров, Федотов йулташсем аван ĕлкĕрсе пыраççĕ. Вĕсем „отлично" паллăсем çеç илеççĕ.

Шкулта пионер отрйачĕсем пурĕ тăваттă. Литературă, драмă, радио, шашкă-шахмăт кружокĕсем ĕçлеççĕ. Литкружока Грофимов учител йертсе пырат. Кружокра 40 ача. Литкружок членĕсен вăйĕпе "Çамрăк поет" йатлă журнал уйăхра пĕр хут тухса тăрат. Унта вĕренекенсен пĕчĕк очĕркĕсем, калавсем, сăввисем пичетлененеççĕ.

Драмкружок та аван ĕçлет. Йанвар уйăхенче колхозсене тухса кружок спектакљсем лартса пачĕ.

Ачасем переменăри вăхăтсене усăлă ирттереççĕ. Биллиардла, доминола, шашкă-шахмăтла выљаççĕ, радио итлеççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ.

Й. Шумилов.

Стенографи кружокĕ

Шупашкарти пионерсен çуртĕнче стенографине вĕренмели кружок пур. Кружокра пурĕ 18 çын вĕренеççĕ. Вĕсем пурте хулари вăтам шкулсенче вĕренекенсем.

Кружока çўрекенсем стенографи паллисемпе вулама, çырма вĕреннĕ те.

М. Карпов

Икĕ трахработник

Тĕрер йалсоветĕнче (Трак р-нĕ) икĕ трахпункт ĕçлет. Иртнĕ çулта иккĕшĕ те йĕркелĕ ĕçлерĕç. Трахом чирĕнчен 120 çынна сыватнă. Трахработниксем ваљљи йалсовечĕ кирлĕ пек условисем туса панă. Уйрăмăнах Терентйев трахработник аван ĕçлет. Ун патне „Буйга", „Правда" тата „Пчелкино" колхозри колхозниксем куçĕсене сиплеме тăтăшах çўреççĕ. Терентйев йулташ ачала хĕрарăмсем патне хăй çўрет. Шкулти ачасем патне кашни висĕ кунтах пырат.

Иккĕмĕш трахпунктри трахработник Николайев йулташ вĕренме кайнă хыççăн, Трак районĕнчи сывлăха сыхлав пайĕ ун вырăнĕнче ĕçлеме Прокопйевăна хушрĕ. Анчах та вăл трахома пĕтерессипе вуçех те ĕçлемест. Трахпункта кун сиктерсе çеç çўрет. Хăй ĕçлекен „Красная Чувашия", Спасов йачĕпе тăракан колхозсенче миçе çын трахомлине те тĕплĕн пĕлмест.

К. Мих.

Чăнлăх—болъшевикла пичетĕн пĕртен-пĕр принципĕ

Буржуази пичечĕ чăн çырма пултараймаст. Капиталисăма сутăннă пичетĕн чăнлăх пулма та пултараймаст. Капиталисла патшалăхсенче рабочи класпа ĕçхалăхĕн пурнăçĕ çинчен коммунисла партисен хаçачĕсем çеç тĕрĕс çыраççĕ. Анчах вăл чăнлăхлă хаçата вуланашăн капиталиссем, вĕсен полицисем, рабочисене тĕрмесене хупаççĕ. Фашисла Германире, сăмахран, „Роте Фане" хаçата вуланăшĕн рабочисене тĕрмесенче çĕртеççĕ, персе вĕлереççĕ.

Пирĕн Ленинпа Сталин çитĕнтернĕ партин чи çивĕч хĕçпашалĕ—пичет йаланах тĕрĕс çырма вĕрентет. Пирĕн массăран пытармали нимĕн те çук. Пирĕн болъшевикла пичетĕн пĕртен-пĕр принципĕ вăл—чăнлăх, чăн çырасси. Пирĕн пичет çитменлĕхсене те ним те пытармаст, уççăнах критиклет. Критикăпа самокритикă—болъшевисăмăн меслечĕ.

Совет хаçачĕсенче ĕçлекенсен, корреспондентсен чăн çырассишĕн кĕрешмеле. Хаçатсене çырас пулсан фактсене тĕплĕн пĕлмеле, тĕрĕслемеле. Фактсене кам пĕлтернине те шута илмеле.

Редакцисенче ĕçлекенсем „кăна епĕр çырман, корреспондент çырнă" тесе, фактсем тĕрĕссипе тĕрĕс маррине пĕлмесĕрех пичетлесе кăлармa васкани нумай йăнăшсем патне илсе пырат.

Совет гражданĕ çинчен улталаса елеклесе çырнă пулсан, ним вăтанмасăрах, хăрамасăрах „çав корреспондент çырнă фактсем тĕрĕс мар" тес пулат. Анчах хăшпĕр хаçатсем тĕрĕс мар, йе елеклесе çырнă заметкă хыççăн, елекленнĕ çынна реабилитироват тумаççĕ, хаçатăн авторитет пĕтесрен хăраççĕ.

Хаçатра ĕçлекен хăшпер работниксенчен çакăн пек каланине илтме пулат: „Пурне те тўрлетес пулсан, 4-мĕш полосана „тўрлетнипех" тултармала". Тўрлетмели питĕ нумай пулсан—редакци калама çук йапăх ĕçленине пĕлтерет. Йăнăшсене, суйса çырнисене пытарас тени, страус çынран пытанас тесе пуçне хăй çунатти айне чикни çеç пулат. Массă пур-перех пĕлет. Унтан пытарни—сийен анчах кўрет.

Халăх тăшманĕсем парти ретĕнче пытанса пурăнас майпа хăш чухне хăйсене пур коммуниссенчен те „сисĕмлĕхлĕ" пек кăтартаççĕ. Вăрă вăрăна, хăй пытанса йулас, йе ытти вăрăсене пытарса хăварас майпа: „ак, вăрă, тыт! " тесе кăшкăрат. Çавăн пекех, партине улталас майпа халăх тăшманĕсем те хăш чухне пĕр „пĕчĕкрех тăшманне" тыттарма та пултараççĕ. Анчах ун хыççăнах вăра вĕсем темиçе айапсăр коммунис çинчен елеклесе партирен кăлартарма тăрăшаççĕ. Хаçатсене çавăн пек „ытлашшипех политикла сисĕмлĕхлĕ" çынсем те çырма пултараççĕ. Ăна та асра тытмала.

Карйериссем, страховщиксем хăйсене пуринчен те сисĕмлĕхлĕ çынсем пек кăтартса, пĕр-пĕр çын çинчен елеклесе йе кураймасăр çырнипех (йе каланипех) ĕçрен, партирен кăларма, халăх тăшманĕ туса хума хатĕр. Çавăн йышшисем хаçатсене тем пысăкăш материал та çырса параççĕ.

Хаçатра ĕçлекенсем хушшинче те страховщиксем çук мар. Хăшпĕр редакторсем çапла шухăшлаççĕ: „Материал килнĕ. Пичетлесе кăлармасан хамăра клас тăшманне пулăшакан", тейĕç. Фактсем тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и—унпала интересленмеççĕ. Виçĕ заметкăран пĕри тĕрĕс пулсан та: „А-а, епĕр ун çинчен çырнă, пире лекмест", теççе вара.

Шăхасан районĕнче çакăн пек факт пулнă: пĕр йалкор райком инструкторĕ Мишуткин „пĕлĕт курăнми ĕçсе ўсерĕлнĕ" тесе редакцине телефонпа заметкă парат. Хаçат редакторĕ Викторов ĕненмесĕр хаçата кĕртмест ăна. Тĕрĕс тăват. Анчах вăл хаçата кĕртменнипех чарăннă. Материала тĕрĕслеме те йаман, авторĕ пирки те шарламан.

Çав факт çинченех „Правда" хаçата çырса пăраççĕ. „Правда" хаçата çырса паракане райком çекретарне—Федоров йулташа та вырăнсăр вараласшăн пулнă. Вăл çапла çырат: „Çав Мишуткинпа Викторовсем райком секретарĕн, Федорован, хисеплĕ шутра тăраççĕ" тенĕ. Нимсĕрех çапла çырнă.

Тĕрĕсленĕ хыççăн, „Мишуткин пĕлĕт курăнми ĕçнĕ" тени тĕрĕс пулмарĕ. Чăнах, вĕсем пĕр йалта çулла шăрăх вăхăтра 2-шер стакан килти сăра ĕçнĕ. Урăх ним те пулман.

Хаçатсене пĕр-пĕр „кўреннĕ" йе критикшăн çиленнĕ çын „епĕ ăна тататăп-ха" тесе, те çырса пама пултарат.

Пирĕн хаçатсем çинче суйса, елеклесе çырни пулмала мар.

С. Карташов.

Колхозник-физкуљтурниксем Мускава кайаççĕ

Чăваш республикĕнчи колхозсенчен пухнă 6 колхозник-физкуљтурник Йершов А.—„Хлебороб" колхоз членĕ (Тутаркас р.), Афанасйев Г.—„11 лет Октября" колхоз председателĕ (Шупашкар р-нĕ). Журављов В.— Таканаш колхозĕнчен (Хĕрлĕ-Чугай р.), Исайев А.—„11 лет Октября" колхоз членĕ, Пашкова Кл.—„Заря" колхозран (Йĕпреç р-нĕ), Шупашкар районĕнчи „11 лет Октября" колхоз членĕ Морозăва йулташсем февралĕн 10-мĕшĕнче Мускава Пĕтĕм Сойузри колхозниксен спартакиадине кайаççĕ.

С. Воробйов

Кăлчедан сийĕ тупнă

Васкассинчи (Елĕк р.) „Иљйич" колхоз колхозниксем çăл алтнă чухне кĕмĕл тĕслĕ çутăлса вырткан таса кăлчедан сийне тупнă. Çав кăлчадан сийĕ 2 пăта йахăн пулнă. Кăлчадан тупнă таврашра хаклă металлсем пур пулĕ, тесе шутлаççĕ колхозниксем.

Й. Прокопйев.

те, лашаран иртсе кайас тесе, утма çул айаккине тухрĕ. Кĕркури утне хăйаккăн çавăрса тăратрĕ, çула картласа хучĕ.

— Йар, Гришкă!

— Йамастăп.

— Ан ухмахлан, ман упăшкана хатĕр çитерсе парас пулат.

Кĕркури кулкаласа, утне хўтĕртсе илчĕ: лаши кайала чакса, Укçинене çыр хĕрнеле хĕстерсе хучĕ.

— Йар, есрелĕ! Ав çынсем килеççĕ, курсассăн мĕн калĕç?

Укçине йенчен йеннеле хăравçăлăн кăн-кăн пăхкаларĕ те, шăмарăлса, çавăрăнса пăхмасăрах иртсе кайрĕ.

Крыљца çинче Петро хăйĕн тăванĕсемпе сывпуллашат. Кĕркури лашана йĕнерлерĕ. Петро, шашкине алăпа тытса, картлашка тăрăх васкаса чĕлпĕре илчĕ.

Лаши, çула сиссе, канăçсăррăн пĕр ури çинчен теприн çине пускалат, çăварлăхне чăмласа кăпăк кăларат. Петро йĕнер авринчен аллипе тытса урипеле стремена çине пусрĕ те, ашшĕпеле сăмахлама пуçларĕ:

— Ыссисене ĕçпеле ан имшерлентер, ан имшерлентер, атте. Кĕр касчăр та сутăпăр. Кĕркурийе валљи ут туйанмала вĕт-ха. Çĕсенхир кўрăкне, асту, ан сутса йар: улăхра кăçал, хăвах пĕлетĕн, утă йепле пуласси не...

— Ну тўрă пулăштăр! Чипер çавăрăнса çўре,—терĕ старик, сăхсăхса илсе.

Петро хăнăхнă меслетпе çăмăлăн йĕнер çине сиксе ларчĕ. Пиçиххине çыхса пĕрмекленнĕ кĕпине хыçалтан туртса тўрлетрĕ. Хĕвел çуттинче лаша утнипе пĕр шай сиккеленсе ыљакан шашкă пуçĕ тĕксĕмĕн йалтăртатса илчĕ.

Тарйе аллинчи ачипеле упăшки хыççăн утрĕ. Амăшĕ, çанă вĕçĕпе куçне, тутăр кĕтессипе хĕрелсе кайнă сăмсине шăлса, килкарти варрине тăрса йулчĕ.

— Питче, кукăљ! Кукăљ манса йулат! Улма кукли!..

Дуњашка, качака пек, хапха патнелле тапса сикрĕ.

— Мĕн кăшкăратăн, ăссăр!—кўренчĕклĕн хăтăрса илчĕ ăна Кĕркури.

— Кукăљсем манса йулчĕç!—ассăн йăнăшса кăшкăрат калитка çумне сĕвеннĕ Дуњашă, хăйĕн вараланчĕк вĕри пичĕ çине, унтан, ипт çинчен килте тăхăнакан кофти çине куççуљсем тумлаççĕ.

Тарйе куçĕсене хĕвелтен аллашипе хўтĕлесе упăшкин тусан чаршавĕ хыçĕнче вĕлтĕртетекен шурă кĕпи çинчен пĕр вĕçĕмсĕр сăнат. Пантелей Прокофйевич, кил хапхин çĕрĕк йупине лăкантарса, Кĕркури çине пăхрĕ.

— Тытса тўрлет хапхана тата пўрт кĕтессине муклашка алтса ларт. Кăштах шухăшласа тăрса, çĕнĕ хыпар пĕлтернĕ пек, хушса хучĕ:—Кайрĕ Петро.

Çатан-карта урлă Кĕркури Степан йенле хатĕрленнине курчĕ. Симĕс сăмçиппи йупкă тăхăннă Укçине ăна лашине çавăтса тухса пачĕ. Степан ăна кулкаласа темĕн калат. Унтан вăл арăмне васкамасăр, кил-хуçи пек, чуптуса илчĕ, аллине нумайчен ун хулпуççийĕ çинче тытса тăчĕ. Хĕвелпеле тата ĕçпеле пиçнĕ алă Укçинен шурă кофти çинче кăмрăк пек хуран курăнат. Степан Кĕркури йенне çурăмĕпе тăрат; çатан карта урлă Кĕркури унăн пăкă та илемлĕн хырса йакатнă мăйне, сарлака та усăнчăкрах хулпуççийĕсене тата вăл арăмĕ умнеле пĕшкĕнсен,—сарă уссин пĕтĕрсе хунă вĕçне курчĕ.

Укçине темĕнрен кулат, темĕшле килĕшмесĕр пуçне пăркалат. Степан йĕнер йăрани çине урипе хăпарса тăрсан тĕреклĕ хура лаша сулăнса илчĕ. Степан лашине хыпалантарса утса хапхаран тухрĕ, хăй йĕнер çинче алтса лартнă пек ларат, а укçине, аллипеле йăранаран тытнă та, айалтан сўлеле йытă пек, йуратнăн та çăткăнăн, упăшкин куçĕсенчен пăхса утат.

Çапла вĕсем кўршĕсен куренĕнчен иртрĕç те тепĕр йеннеле çавăрăнса кĕрсе куçран сухалчĕç.

Кĕркури вĕсене нумайччен куçĕсене илмесĕр пăхса ăсатса йачĕ.

И. Тунташ куçарнă.

Хĕрлĕ çарăн Тĕп çурчĕ

Çурт умĕ сарлака, унăн архитектури питĕ те паха. Пысăк алăкăн икĕ йенче те икĕ тупă.

Есĕр кĕнĕ чухне швейцар аслă вестибўлĕн алăкне уçса хурат. Есĕр Хĕрлĕ Çарăн Мускаври М. В. Фрунзе йачĕпе тăракан Тĕп çуртĕнче.

Картлашкасем тăрăх хăпарнă чух икĕ йенче те пĕлтерўсем çакăнса тăнине курарăн. Сылтăм йенче çакăнса тăраканнисем Хĕрлĕ Çарăн Тĕп çурчĕ мĕнпе пурăннипе тата çуртăн халљ иртекен уйăхри ĕçĕсен планĕпе паллаштараççĕ. Сулахай йенчи пĕлтерўсем çурт пайанхи кун мĕнпе пурăнни çинчен пĕлтереççĕ. Илемлетсе çырнă уйрăм пĕлтерўсем асăрхаттараççĕ: Хĕрлĕ йалавлă залăра—балалайкă оркестрĕн концерчĕ; Концертсен залĕнче республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ В. А. Давыдова Мускав гарнизонĕн командирĕсем умĕнче творчествăлă рапортпа тухса калат; Кăвак залăра—„XVIII ĕмĕрти Российă—купцасемпе помешчиксен империйĕ" темăпа лекцисем пулаççĕ.

Начсостав валљи Испанири вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен доклад пулат... Хуçалăхлă çул итогĕсене тата виççĕмĕш пйатилеткăн задачисене сўтсе-йавас майпа гарнизонри хĕрарăмсен пухăвĕ пулат.

Хĕрлĕ Çар Тĕп çурчĕн йаланхи кун йĕрки çакăн пек. Кунсерен кунта чылай докладсем, лекцисем, концертсем, киносеансем пулса иртеççĕ, икĕ-висĕ выставкă ĕçлет.

Шекспир, Гете, Пушкин çинчен литературă вечĕрĕсем, çамрăк пултарулăхсен вечĕрĕсем, Хĕрлĕ Çара куљтурлă шефа илнĕ май искусствă работникĕсен конференцийĕ, красноармейецсемпе командирсен искусствă пултарулăхĕн вечĕрĕсем, тĕнчери поезипе пĕтĕм тĕнчери класçиклă литературă çинчен лекцисем, музыкă историйĕ çинчен, совет çĕршывĕнчи тата йутçĕршывсенчи чи лайăх композиторсен творчестви çинчен лекцисем, вăрçă ĕçĕн мăтăвĕсемпе лекцисем.

Куљтурăн çĕнĕ сўлĕшсене алла илекен Хĕрлĕ Çар командирĕсен ыйтăвĕсем питех те нумай тата тĕрлĕрен, çавăн пекех Тĕп çуртри тематикă та нумай тĕрлĕ пулса пырат.

Лекци пыракан залсем йаланах тулли.

Çурт çумĕнче тĕрлĕрен курссем ĕçлеççĕ: Çар академине кĕме хатĕрлес тĕлĕшпе, йутçĕршывсен чĕлхисене вĕрентес тĕлĕшпе, тĕрĕ-çĕвĕ ĕçĕн инструкторĕсен курсĕ т. ыт. те.

Консуљтаци паракансем патĕнче çар ыйтăвĕсемпе тата граждăнла саккунсем çинчен кирек йепле ыйту çине те справкăсем илме пулат. Туриссен пайĕнче сўлĕ тусем çине кайакан походра пулма çырăнма, ту çинчи лагĕре кайма кирлĕ хута илме пулат.

Çак нумай йенлĕ куљтурă кабинетĕнче пирĕн Хĕрлĕ Çар командине ўсме тата канма мĕн кирлине пурне те тупма пулат. Унта Хĕрлĕ Çар историн музейĕ те, гимнастикă залĕсем те, биллиардсем те, канмали илемлĕ пўлĕмсем тата ĕçлеме лайăх туса йĕркеленĕ вуламали пўлĕмлĕ библиотекă пур. Çуртăн пĕтĕм атмосфери лайăх канма майсем туса парат. Çурт питĕ те таса, стенисене хитре те илемлĕ сăрпа сăрланă, кавирсем çемçе те илĕртўлĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Тĕп çурчĕ Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă çыннисен савăнăçлă центрĕ пулса тăчĕ. Кунта красноармейецсен йурăпа ташă ансамблĕ, чыслă ансамблĕ çуралса ўсрĕ, ăна пĕтĕм çĕршыв савса йуратат, ўсет те вăйланат красноармейецсен симфонилĕ оркестрĕ. Красноармейецсен балалайкă оркестрĕ чăннипех те художествăлă коллектив пулса тăчĕ.

Çурт çумĕнчи Хĕрлĕ Çарăн центрти театрĕ сакăр çул ытла ĕçлет, ăна искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ А. Д. Попов йертсе пырат. Хĕрлĕ Çартан çуралса ўснĕ театр Совет Сойузĕнчи мĕн пур театрсемпĕн оборонă драматургинчи пиоèр пулса тăрат. Халле, пирĕн çĕршывăн çар округĕсене кайса, çула, лагĕрти пурнăçпа пурăннă чухне красноармейецсен чаçĕсене выљаса парса, Хĕрлĕ Çар театрĕ çар пайĕсенчен пĕри пулса тăрат.

Халĕ Мускаври Коммунă площчĕдĕнче театр валљи питĕ те пысăк çурт туса пĕтереççĕ, вăл Мускаври чи пысăк çуртсенчен пĕрийĕ пулат. Унăн сцени çинче пĕр вăхăтрах пĕр пине йахăн артиссем вырнаçма пултараççĕ. 25 хутлă çурт çўлĕш, йе 85 метр çўлĕш театр çурчĕн тăрринче красноармейец статуйĕ пулат.

Хĕрлĕ Çар çурчĕн мĕн пур художествăлă коллективĕсем Мускаври рабочисен тата красноармейецсен клубĕсене, красноармейецсен чаçĕсене, тата ытти хуласенчи çар округĕсене час-часах тухса çўреççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Тĕп çуртĕнче пирĕн геройла Хĕрлĕ Çарăн ĕлĕкхипе халљхи пурнăçне кăтартса паракан картинăсен пĕртен пĕр галлерейĕ пур. Вăл Хĕрлĕ Çар йубилейĕсенче уснă выставкăсен хаклă та паха картинсене пĕрлештерсе тăрат. Кунта Бродский, А. Герасимов, Соколов-Скаљ, Греков, Машков тата ытти нумай пысăк художник-мастăрсен полотнисем пур.

Тĕп çурт çумĕнчи Хĕрлĕ Çар музейĕ калама çук пысăк куљтурăлă-политикла вырăн йышăнса тăрат, ăна курма сойузăн пур кĕтесĕсенчен те питех нумай ĕççыннисем пыраççĕ.

Тĕп çуртăн библиотеки пĕлўлĕхĕн пур отраçлисем тăрăх та 100 пин ытла кĕнекесем тытса тăрат. Унăн мухтавлă вулаканĕсем те нумай. Командирсем нумайĕшĕ мĕн çинчен те пулин тупса пĕлес тесе вулаççĕ. Василйев майор вăтам ĕмĕрти беллетристикăпа интересленет, Леонтйев капитан кучуйхнехи Испанин художествăлă литературипе паллашат. Йатарласа уйăрнă автомашинăсем тата кĕнеке валеççе паракансем командирсене вĕсем ыйтнă кĕнекесене килех илсе пырса параççĕ.

Сăлкуçĕ пек вĕресе тăрат Тĕп çуртри спортивлă пурнăç, суртра çĕршывăри чи лайăх йĕлтĕрçĕсен команди тата пăшалпа тĕл перекенсен спортивлă команди пур. Тĕп çурт представителĕ красноармейец Бойченко йулташ ишес тĕлĕшпе пĕтĕм Сойузри тата пĕтĕм тĕнчери рекорд турĕ. Хĕрлĕ Çарăн Тĕп çурчĕн спортсменĕсем хушшинче спорт мастăрĕ ССР Сойузĕн конљкисемпе йарăнас тĕлĕшри абсољутлă чемпионĕ—Аниканов. Çуртăн паха та кăмăллă гимнастикă залĕсенче кашни кунсеренех çĕршер çын пулат.

Хĕрлĕ Çарăн Тĕп çурчĕ — çĕршывра альпинисăмăн чи ĕлĕкхи тата пысăк центрĕ. Вăл çĕршер командир-альпиниссем хатĕрленĕ. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле Хĕрлĕ Çар альпинисĕсем Ељбрус çине икĕ çĕртен хăпарса кайаççĕ.

Çула Тĕп çуртăн пĕтĕм ĕçĕ парка куçат, парк Мускав гарнизонĕнчи начсоставăн çулахи вăхăтра канмали йуратнă вырăнĕ пулса тăрат. Хĕрлĕ Çарăн Тĕп çуртне тата унăн паркне Мускав хулинчи мĕн пур халăхсем хĕрўлĕн хисеплеççĕ.

Пирĕн аслă тăван çĕршывăн пурнăçĕнче пулакан кашни ĕçех Тĕп çурт ĕçĕнче паларса тăрат. 1937—38 çулсенчи хĕллехи çезонра тунă нумай ĕçсем хушшинче: çар ыйтăвĕсем тăрăх 75 доклад, куљтурă ыйтăвĕсемпе—65, писателсемпе, учонăйсемпе тата ăслăлăхпа искусствăри ытти деятелсемпе тĕл пулса 92 вечер тунă, 31 выставкă, 365 концерт çуртра тата 2100 концерт вырăнсене тухса иртернĕ.

Цифăрсем хăйсемех мĕн кирлине каласа параççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле Хĕрлĕ Çарăн Тĕп çурчĕ пусăрнипе Мускавра оборонă музыкĕн вунăкунлăхĕ пулса иртет, вăл вунăкунлăха Мускаври чи лайăх художествăлă вăйсем хутшăнса ĕçлеççĕ. Тĕп çуртăн залĕсенче йубилей кунĕсенче красноармейецсен пултарулăхĕн пысăк выставки уçăлат.

Çапла пурăнат те ĕçлет Хĕрлĕ Çарăн çак питĕ те паха çурчĕ. (ТАСС).

Республикăлă Испанине блокадă тăвассине пĕтерме ыйтаççĕ

ПАРИЖ, 6—II. (ТАСС). Франци çамрăкĕсем пур çĕрте те Испани халăхĕпе пĕрле пулас тĕлĕшпе сарлака кампани пуçланă. Кампанин малтанхи кунсенчех чылай укçа пухнă.

Парижра тата Париж облăçĕнче компарти республикăлă Испанипе пĕрле пулас тĕлĕшпе митингсем туса иртерчĕ. Митингра тухса каланă ораторсем Франци правительствине республикăлă Испанине блокадă тăвассине пĕтерме ыйтнă.

Пăлхавçăсен тылĕнче

ПАРИЖ, 6-II. Еспаң агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Ла Линева халăхĕ (Испанин кăнтăр йенĕнче) Кордова фронтĕнчен грузовиксемпе хулана пыракан аманнă çынсем тулнипе питĕ щикленет. Аманнисем хушшинче тифпа чирленисем чылай. Пăлхавçăсен влаçĕсем аманнă тата чирлĕ салтаксене уйрăм пÿртсенче тата кинемотографсене вырнаçтарма халăха ирĕксĕрлеççĕ, хулари пĕртен пĕр госпитале нормăран та ытлашши тултарнă.

Пăлхавçăсен влаçĕсем хулара тиф епидемийĕ сарăлас хăрушлăх çинчен калаççĕ, вăл хăрушлăх медицинă пулăшувĕ çителĕксĕррипе татах та ÿсет. (ТАСС).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ССР Союзĕн Государствă Банкĕ кăларнă, халь çÿрекен, çĕнĕ червонцăсен образецсем (пĕчĕклетсе ÿкерчĕ). Союзфото репродукцийĕ.

Çуртырри акаççĕ

АШХАБАТ, 7-II. Туркменире пĕрчĕлĕ тырăсене массăлăн акма пуçланă. Тулăпа урпана 7 пин ытла гектар çине акнă.

МАХАЧ-КАЛА, 7-II. Баба-Йуртовский тата Кумтор-Калинский районсенче çурхи çĕртме сухине тума тытăннă.

СТАЛИНАБАТ, 7-II. Татжикистанра питĕ ăшă çанталăк тăрать. Республикăн кăнтăрпа вăтаçĕр районсенчен каљчасем лайăх тухни çинчен пĕлтереççĕ. Каљчасем Çавнашкалах Курган Тубинскпа Шахринауск районĕсенчи уйхирсенче те тухнă. Сталинабат çывăхĕнче каљчасем виçшер çулçă кăларнă.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Февралĕн 1-мĕшĕпе 7-мĕшĕ хушшинчи ĕçсене пăхса тухни

Китайри вăрçă ĕçĕсем халљхи вăхăтра икĕ тĕп фронтра — Вăтам Китайри тата Çурçĕр Китайри фронтсенче сарăлса пыраççĕ. Малтанхи пекех Йапони командованийĕ хăйĕн тĕп вăйĕсене Таңцзиң—Пукоу чукунçулне туртса илес çĕре йарса тăрать, мĕншĕн тесен Таңцзиң—Пукоу чукунçулĕ вăрçă тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк вырăн йышăнать. Çав çул çурçĕртен кăнтăра çитиччен пĕтĕм Вăтам Китай урлă каçать, йапонецсем йышăннă хуласене Çурçĕрте Таңцзиң тата кăнтăрта Нанкин хулисене пĕрлештерсе тăрать. Çулăн вăтам пайĕ китайецсен аллинче. Йапонецсем ку çула хăйсен Çурçĕр тат Вăтам Китайри çарĕсене пĕрлештерес шутпа, çавăн пекех тата çав çулăн хĕвелтухăç йенчи территорин чылайĕш пайне йышăнас шутпа туртса илме хăтланаççĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Йапони захватчикĕсем Таңцзиң—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр тата çурçĕр участкисенче иккĕшенче те пĕр вăхăтра наступлени тума пуçланă.

Чукунçулăн çурçĕр участкинче йапонецсем, малтанхи вăхăтра Китай çарĕсем вĕсене хирĕç ытла та пит хыттăнах тăманнипе усă курса, тата Китайăн Шаңдунри çарĕсене йертсе пыракан Хаң Фужцÿ генерал сутăнчăкла ĕçсем туса пынипе (нумайах пулмасть Китай правительствин приказĕ тăрăх ăна персе вĕлернĕ), Шаңдун провинцин тĕп хулине—Цзинаңе тата Цзинин хулине туртса илнĕ. Шаңдун фронтĕнче командованийе улăштарнă хыççăн Китай çарĕсен лару-тăрувĕ самайах лайăхланса çирĕпленнĕ.

Халљхи вăхăтра çапăçусем Цзинин хули çывăхĕнче пыраççĕ. Хулана Китай çарĕсем хупăрласа илнĕ.

Чукунçулăн кăнтăр участкинче çапăçусем Бенпу хули районĕнче (Нанкинран çĕр аллă километра йахăн çурçĕрелле) пулса пыраççĕ. Февралĕн 3-мĕшĕнче çĕрле çав хулана Йапони çарĕсем илнĕ.

Йапони çарĕсем вăл районта çул тăрăх çеç малала куçнă. Чукунçулăн икĕ айккипе те Китай çарĕсемпе партизансем тăраççĕ. Вĕсем Йапони çарĕсене çурçĕрелле куçма тытса чарса тăраççĕ. Китай çарĕсемпе партизансем пĕр пулса вăрçсан, йапонецсене хупăрласа илсе, вĕсене Йапонин Нанкинри çар базинчен уйăрни пулма пултарать,—унта йапонецсем умĕнче çав хăрушлăх пур.

Шаңси провинцинче (Çурçĕр Китай) йапонецсем Китайăн саккăрмĕш революцилĕ халăх çарне тата партизансене хирĕç пуçланă „иккĕмĕш вăрçă" пĕр уйăх ытла пырать ĕнтĕ. Йапонин самољотсемпе, артиллерипе тата танксемпе хĕçпăшалланнă 60 пине йахăн салатаклă каратељнăй експедицийĕ партизанла йухăма чарса лартма пултарайман. Партизансем Йапони чаçĕсем çине тапăнаççĕ, чукунçул тăрăх пойассем сÿретме чараççĕ, Йапони фронтне тĕп çар базисемпе çыхăну тытма чăрмантараççĕ, çапла майпа вĕсем çурçĕр провинцинче йапонецсене тытса чарса тăраççĕ, малала кайма памаççĕ.

Вăтам Китайра, Нанкинран кăнтăртарах, Китай çарĕсем Ухуçине контрнаступлени тума пуçланă. Китайецсем хула çывăхĕнчи сăртлă вырăнсенчи вăрçă тĕлĕшĕнчен паллă пунктсене нумай йышăннă. Йапонецсем Уху хули патне 20 пин салтак ытла илсе пынă. Унта пысăк çапăçусем пыраççĕ.

1914—1918 çулхи вăрçăсенче позицисенче тăрса çапăçнă пулсан, Китайри вăрçă маневăрлă вăрçă пулса тăрать. Унта фронтсем питĕ хăвăрт улшăнаççĕ, вĕсем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна час куçаççĕ, темиçе тĕрлĕ çапăçусем пулаççĕ: атакăсем, контратакăсем. Китай çарĕ техникă тĕлĕшĕнчен Йапони çарĕнчен чухăнрах. Çавăнпа вăл фронтсенче Йапони çарĕсен пысăк соединенийĕсемпе тĕл пулса, хирĕç-хирĕç тăрса çапăçасшăн мар, ун вырăнне вăл маневăрсем тăвать, фронт линине тăсса йарать.

Халљхи вăхăтра Йапони çарĕсем территорин мĕн пур анлăшĕпе сапаланса кайнă, çавна пула фронтăн пĕр участкинчен тепĕр участкине подкреплениесем илсе пыма хĕн. Ку вăл Китай çарĕсемшĕн лайăх, мĕншĕн тесен вăл Йапони çарĕсен пĕр-пĕринчен уйрăм тăракан чаçĕсене çĕмĕрсе тăкма май парать.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем тăрăх

„Арăмне ватнăшăн—судпа айăпламала"

Семенов П. йулташ Йетĕрне районĕнчи Măн-Сĕнтĕрти пуçламĕш шкулта веренекен Лебедев Спиридон ĕçсе ÿсĕрĕлсе арăмне хĕнени инчен редакцине çыру çырнăччĕ.

Лебедев учител сакăр хут авланнă. Вăл пĕр арăмĕпе те ыра пурăнман, йаланах хĕненĕ, мăшкăланă. Халь пурăнакан арăмне темиçе хутчен те вĕлерме тăнă.

Паллах, кун пек тискер çын ачасене кирлĕ воспитани пама пултарайман. Вăл уроксене вăхăтра пыман, çитменнине тата ÿсĕр йе мухмăрла пынă. Ачасенчен йаланах тăрăхласа мăшкăланă. Лебедев учител мăшкăланипех лайăх тăрăшса вĕренекен Тарасов Д. шкула çÿреме пăрахнă.

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ çак заметкăна Йетĕрне районĕнчи прокурор патне тĕрĕслеме йанăччĕ.

Тĕрĕсленĕ хыççăн, Лебедев учител çинчен çырни пурте тĕрĕс пулнă. Лебедева УК 146-мĕш статйин иккĕмĕш пайĕпе айăпласа уголовлă ĕç пуçарнă.

„Мĕншĕн апла пулнă" Григорйев йалкор Урташри „Хĕрлĕ Октябĕр" колхоз (Елĕк р—нĕ) председателĕ Федотов сысна фермин заведуйушчи пулса ĕçлекен Никифоровпа пĕрле выљăх апачĕсене пасарсене кайа-кайа сутнă, колхозăн лаша вити—çуннăшăн 6500 тенкĕ илнĕ страховкă укçине вырăнсăр салатса пĕтерни, ăратлă такана пусни, 3 лав кантăр çурăмĕсене çĕртсе йани тата ытти йĕркесĕрлĕхсем çинчен çырнăччĕ.

Ку заметкăна тĕрĕслеме редакци Елĕк райĕçтăвкомне йанăччĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн, кăтартнă фактсем тĕрĕс пулнă, Федотов çинчен ĕçе райĕçтăвком президиумĕнче пăхса тухнă. Федотова колхоз председателĕнчен хăтарса ĕçе прокурор аллине памала тунă.

Тракри çыхăну уйрăмĕ çинчен. „Чăваш Коммунĕ" редакци Тракри çыхăну уйрăмĕ çинчен килнĕ çырусене Трак райĕçтăвкомне тĕрĕслеме йанăччĕ. Вăл çырусенче: Тракри çыхăну уйрăмĕн начаљникĕ пулса ĕçлекен Сперанский А. Н. хаçат-журналсене подписчиксем па не вăхăтра çитермест, çыхăну уйрăмĕн работникĕсем хаçат журналсем çырăнса илекенсен укçисене салатса пĕтернĕ, чылай йалсоветсенче телефонсем ĕçлемеççĕ, тесе çырнă.

Тĕрĕсленĕ хыççăн заметкăсенче кăтартнисем пурте тĕрĕс пулнă. Çыхăну уйрăмĕн начаљникне Сперанскине тата телефонисткă пулса ĕçленĕ Червйаковăна пĕчĕкрех ĕçе куçарнă.

Телефон аппарачĕ пăсăлчĕ...

Кабинетри телефон час-часах шăнкăртатни районти çыхăну пайĕн начаљникне сывлама та памасть.

— Телефон аппарачĕ пăсăлчĕ. Йусама килĕр.

— Ку телефонпа, хăть те мĕн калăр, пĕртте калаçаймастпăр: темиçе çĕртен калаçни кунта килсе илтĕнет.

Çакăн çинченех хаçата заметкă килет.

„Елĕк телефонĕсем абонементсене савăнтармалах пулмарĕç".

„Телефон карас техникăна пăхăнса пыман пирки, çула аça çаппипе 50 мăшăр пушкартан çурри ытла йурăхсăра тухрĕç". „Шупашкартан тÿрех Елĕке çÿрес почтă Канаш тата Вăрнар патĕнчен çаврăнса килет". Тата ытти те.

Елĕк райĕçтăвкомĕ ăна иртнĕ çулхи декабĕрĕн 8-мĕшĕнче тата кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕнче тепре тĕрĕслесе тухать.

Вăл çапла пĕлтерет:

„Заметкăра кăтартнисем тĕрĕс. Телефон карассине йури сăтăрлас майпа тунă. Аçа çапсан, техникăна пăхăнмасăр карнă телефон, район центрне пысăк сийен кÿме пултарать. Ку сăтăрла ĕçсем çинчен Елĕкри çыхăну пайĕ Республикăри Çыхăну Управленине темиçе хут та пĕлтерне ĕнтĕ. 1936 çулта Çыхăну Управленийĕнчен Йерофейев инженер килчĕ, тата кайран 3—4 техник йачĕç. Нимĕнле мера та йышăнмарĕç. Елĕк халĕ татах сăтăрçăсен йулашкийĕсене пĕтерме килме Çыхăну Управленинчен çынсем ыйтать. Ăна хирĕç Çыхăну Управленийĕ ответ та, салам та йамасть".

Елĕк райĕçтăвкомĕнчен тепĕр тĕрĕслÿ акчĕ килет.

„Заметкăра Çыхăну Управленийĕнче ĕçлекен Рукавишниковпа Йерофейев синчен çырнă. Пĕтĕмпех тĕрĕс. Йерофейевшăн Елĕкри çыхăну пайне сийенлемеле тунă ĕçсем пĕтĕмпех паллă. Йури нимĕнле мерăсем йышăнмасăр пурăнать".

Елĕк 1935 çултанпа ĕнтĕ çакăн пек сăтăрла ĕçсем пирки асаплать.

Кабинетра телефон шăнкăртатни районти çыхăну пайĕн начаљникне çаплах канлĕх памасть-ха.

— Телефон аппарачĕ... Телефон...

„Чăнахах та çапла. Йалкор тĕрĕс çырать", тесе райĕçтăвкомран пĕлтернине: районăн çыхăну ĕçĕ начар пулсан та, епĕр унпа пĕрте интересленместпĕр. Кама мĕн кирлĕ, камăн мĕн ыратать, хăйех шыраса туптăр, тÿрлентĕр, тесе калана пек ăнланатпăр.

Çакăн пирки те райĕçтăвком икĕ заметкă тĕрĕсленĕ хыççăн та, хăйĕн йенчен районти çыхăну ĕçне лайăхлатасси çинчен мĕнле мерăсем йышăнни çинчен пĕлтермест.

Пĕлме çук, тен, вĕсемшĕн вăл пысăк чăрмав. Çыхăну ĕçне лайăхлатсан, почтă та йĕркелĕ çÿреме пуçласан, телефон шăнкăравĕ те лайăх йанăрасан,—камшăн начар пултăр-ха вăра? Района лайăх. Подписчиксемшĕн ырă. Абонементсемшĕн кăмăлă. Епĕр çакăн пек çыхăнушăн тăратпăр.

Ив. Мосейев.

Вĕри вырăн

Анат Сăнарти (Йетĕрне р.) „Çĕнĕ çул" колхозра декабĕрĕн йулашки кунĕсенче Й. Некрасов анкартишĕнче пăсланса тăракан йурсăр вырăна асăрхана. Çав вырăнта çĕр ăшăнна, курăксем шăтнă. Вăхăт иртнĕ май пăсланса тăракан çĕр лаптăкĕшĕ асланса пырать. Халь вăл вырăн 6 тăваткăл метр чухлĕ.

Çĕр айĕнчи температурă та ÿлшăнса пырать. Некрасовăн ывăлĕ, Х-мĕш класра вĕренекенскер, сăнанă тăрăх, 1 метр тарăнĕшĕнче тепературă вăтамран та (вунă кун хушшине илсе пăхсан) 8 градус чухлĕ хутшанса пырать.

Çак ĕç çинчен Чăвашсен ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ те пĕлнĕ. Вĕсем „Çĕнĕ çул" колхоза çав йапалана сăнас тесе темиçе хутчен те пыма пулнă, анчах та халĕ те пымаççĕ-ха.

Й. П.

ОТВЕТСЕМ

ЫЙТУ. Мĕншĕн чулсем çырмасенче анчах пулаççĕ?

Йетĕрне р. И. Сорокин

ОТВЕТ. Чулсем мĕншĕн шыв çурса кайнă çĕрте нумай тĕл пулнине ăнланма çĕр çинчи хăйăр, тăм, тăпра мĕнле пулнине астумала. Çак йапаласем çинчен геологи текен ăслăлăх тĕплĕ вĕрентет.

Ĕлĕкхи вăхăтра çĕр çийĕ пĕтĕмпех чуллă пулнă. Темиçе çĕр мĕлйун çул иртсен çак чуллă сийрен хăйăр, тăм, тăпра пулнă. Хĕвел ăшши, сывлăш, шыв тата сывлăшри тĕрлĕ йапаласем, шывра ирĕлнĕ йапаласем темиçе мĕлйун çул хушшинче çак чуллă сийрен вĕтетсе тăм, хăйăр тунă. Вăйлă шывсемпе айалала йухса анакан чулсем пĕр пĕринпе перĕнсе катăлса вĕтелсе пынă. Халĕ те шыв хĕррипче темĕн чухлĕ йака чул татăкĕсем тĕл пулаççĕ. Вĕсем ытти чулсемпе перĕнсе йакалса пыраççĕ. Шывра кăмрăк йÿçеклĕ газ ирĕлсе кислота пулать. Вăл хăш чулсене кăшт ах та пулсан ирĕлтерет. Унтан тата сывлăшра електрицă разрйачĕсем пулса иртнĕ чухне азотлă кислотасем те пулаççĕ. Çак кислота та шывра ирĕлсе тĕрлĕ чулсене çийелтен ирĕлтерме пултарать. Тĕнчери йапаласем пурте ăшăтсан сарăлаççĕ, сивĕнсен пĕрĕнеççĕ. Чулсем те çакăн пекех. Анчах чулан хăш пайĕсем сивĕннĕ чухне пĕр пекех пĕрĕнмеççĕ, сарăлнă чухне те пĕр пек сарăлмаççĕ. Çакăн пирки чулсем пĕрмай çуркаланса пыраççĕ. Сивĕ, ăшă, шыв, сывлăш чулсене темиçе мĕлйун çулсем хушши çуркаласа, таткаласа, вĕтетсе пынă пирки çĕр çинче вĕтĕ йапаласем пулнă. Çак вĕтĕ йапаласене йухан шыв таçта ситиччĕнех йухтарса кайнă. Тинĕсе çитсен йухан шывпа пынă йапаласем тинĕс тĕпне пулнă. Тинĕсем те пĕрмай пĕр вырăнта пулмаççĕ. Тинĕс тĕпĕ çÿлелле хăпарса ун вырăнче типçĕр пулать, ун вырăнне типçĕр вырăнче тинĕс пулса тăрать. Темиçе çĕр мĕлйун çул иртиччен пĕр вырăнтах темиçе хут та тинĕс те типçĕр те пулса иртнĕ. Типçĕрти тăм, хăйăр ăшĕнче хутте хăçан та ĕлĕк тинĕсре пурăннă чĕрлĕхсен шăммисем тĕл пулаççĕ. Çак йапала типçĕр вырăнче ĕлĕк тинĕс пулнине пĕлтерет.

Халљхи вăхăтра та шыв çĕр çийне питĕ хăвăрт улăштарса пырать. Йуханшыв темĕн чухлĕ хăйăр, тăм йухтарса кайать. Пысăкрах чулсем шывпа хăвăртах каймаççĕ. Çакăн пирки çырмасенче темĕн чухлĕ чул тăрса йулать.

ЫЙТУ. Аслатилĕ çăмăр хыççăн мĕншĕн сывлăш усă?

Çĕрпÿ р. Прокопйев П.

ОТВЕТ. Сывлăшра хуть те хăçан питĕ вĕтĕ йапаласем, тусан пайĕсем пулаççĕ. Çăмăр çунă чухне сывлăш çак тусанран тасалать те сывлама çăмăлтарах пулать. Унтан тата аслатилĕ çăмăр чухне сывлăшри кислородран озон текен йапала пулать. Озон вăл сывлăша усă тăвакан йапала. Озон хыр вăрманĕсенче чылай пулать. Çакăн пирки хыр вăрманĕсенче сывлăш хуть те хăçан та усă пулать. Аслатилĕ çăмăр чухне електрицă разрйачĕсем сывлăшри кислорода улăштарса озон тăваççĕ.

Ф. Кузьмин.

Колхозра телейлĕ пурăнать

Иенщик-Чуллă йалĕнчи (Трак р.) „Çĕнĕ вăй" колхозри П. Данилов колхозник 50 çула çитнĕ. Анчах унăн кунĕсем курмаççĕ. Çапах та вăл колхозра хăй тума пултерна ĕçсене хăрăшсах тăвать. Кăçал хăй пĕр пĕччен колхозра ĕçлесе 160 ĕçкунĕ турĕ. 1937 çулта колхоз пысăк тупăшлă тырпул туса илчĕ. Ĕçкунĕ пуçне 9-шер килограм тырă тивет. Çапла вара П. Данилов колхозник хăй пĕччен 90 пăт тĕштырă илет. Çакăншăн вăл питĕ те савăнать. Колхозсем туса панăшăн аслă Сталин йулташа чĕререн тав тăвать. „Ĕлĕк пулсан епĕ пайанхи кун та выçă лармала, колхоз çеç мана тулли пурнăç туса пачĕ", —тет вăл.

Ф. Григорйев.

СОВЕТ ÇĔРШЫВĔ ТĂРĂХ

✪ Йарослављри автомобилсем туса кăларакан завод икĕ хутлă троллейбуссем туса кăларма тытăнать.

✪ Арктикăра пољар каçĕ пĕтме пуçлать. Кун сисĕнмелех тăсăлнă. Архангељскра ирсенче уйар çанталăкра хĕвел те курăнать.

✪ Мускаври Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвкинче тунă пахча-çимĕçсен ăшă вырăнĕнче йанвар уйăхĕнче пĕрремĕш хут хăйарсемпе помидорсем пухса илнĕ. Хăйарсемпе помидорсене иккĕмĕш хут март уйăхĕнче пухса илеççĕ.

✪ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Тинĕс-Çар училищисене вĕренме илме зайавленисем йышăнма пуçланă. Училищăна 17 çултан пуçласа 22 çул таран, вăтам шкултан (вунă çул вĕренмели шкул) вĕренсе тухнисене йе вĕсемпе танлашакан шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. Вĕренме илмели испытани йиулĕн пĕрремĕшпе августăн пĕррмĕш хушшинче пулать.

(ТАСС).

Коњкипе чупакансен ăмăртувĕ

Февралĕн 6-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи физкуљтурă обшчествисен коњкипе чупассипе ăмăрту пулса иртрĕ. Ăмăртуве „Спартак", „Темп", „Буревестник" командисем хутшăнчĕç.

Коњкипе 100 метра чупассипе пĕррмĕш вырăна „Спартакăн 1-мĕш" команди йышăнчĕ, иккĕмĕш вырăна—„Темп", виççĕмĕш вырăна—„Спартак", тăваттăмĕш вырăна—„Буревестник" команди йышăнчĕ.

Уйрăм физкуљтурниксенчен çак йулташсем мала тухрĕç: Семенова („Спартак") 100 метра чи пиовай чупса çитрĕ, унăн вăхăчĕ 15,8 çекундă. Ун хыççăн Дивйатийарова („Спартак") чупса çитрĕ, унăн вăхăчĕ 15,9 çекундă.

Хĕрарăмсенчен 1000 метра чи малтан Срибнайа йулташ („Спартак" команди) чупса çитрĕ, унăн вăхăчĕ 1 минут та 14,5 çекундă. Иккĕмĕшĕнчен Стољарова („Темп") чупса çитрĕ, унăн вăхăчĕ 1 минут та 23,4 çекундă.

Виçĕ çухрăма чупассипе пĕррмĕш вырăна Пољаков („Темп") йышăнчĕ, унăн вăхăчĕ 6 минут та 35,2 çекундă.

Иккĕмĕш вырăна Смирнов („Темп") йышăнчĕ, унăн вăхăчĕ 6 мин. 57,6 çекундă.

С. Воробйов.

Чаплă фиљм

Çак кунсенче Тракра (район центрĕнче) „Петр 1" кинофиљм кăтартаççĕ. Пысăк хавасланпа кураççĕ историлĕ кинокартинăна ĕçсыннисем. Февралĕн 7-мĕшĕнче çав картина курма 250 çын пынă.

Сетепанов.

25 çын вĕрентсе кăларчĕç

Аслă Каçалти (Патăрйел р.) туллимар вăтам шкулти учителсем хутла сахал пĕлекенсене вĕрентессипе тăрăшса ĕçлерĕç. Çак кунсенче çеç вĕсем хутла сахал пĕлекенсен шкулĕнчен 25 çынна вĕрентсе кăларчĕç.

Тр. Еçљуков.

Вăхăта куљтурлă иртереççĕ

Йетĕрне. Пушнарти Мичурин йачĕпе тăракан колхозăн клуб пур. Колхозниксем кашни каçах клуба радио итлеме, шашкă, шахмăт, домино, биллиардла выљама пухăнаççĕ.

Кăçал библиотекă чылай кĕнекесем туйанчĕ. Кĕнекесем илсе вулакансен шучĕ те чылайах ÿсрĕ. Кашни ернерех клубра спектаклљ пулать.

А. Соловйов.

Йалсоветĕ тăрăшмасть

Кукеç. Шурчакасси йалсоветне кĕрекен „Пионер" колхозра А. Иванов зайом укçи пухакан сборщик пулса ĕçлет. Çапах вăл зайом укçине пухассишĕн пĕртте васкамасть. Каганович йачĕпе тăракан колхозра хĕшпĕр колхозниксем зайом укçине такçанах тÿлесе татнă. Ширнов бригадир ытти парăмсемпе пĕрлех зайом укçине те парса татрĕ.

Шурчакасси йалсовечĕ зайом укçи начар пухăннине курса тăрать пулсан та, ку тĕлĕшпе ĕçе организацилесе пыма тăрăшмасть.

А. Моисейев.

СУД

Колхозниксене хĕненĕшĕн

Мољаккассинчи М. Йегоров колхозра бригадир пулса ĕçленĕ вăхăтра пĕр майах ÿсĕр çÿренĕ, колхозниксене тыта-тыта хĕненĕ. Пĕррехине вăл ĕçсе ÿсĕрлнĕ те Зубнов колхозникĕ тытса хĕненĕ. Çавнашкалах тата 58 çулхи колхозницăна Богатыревнăна хĕнесе пĕтерне. Колхозри коњух Никитин йулташа хĕнесе, унăн икĕ шăлне çапса хуçнă тата ыт. те.

Йанварĕн 27-мĕшĕнче Йетĕрне районĕнчи халăх сучĕ хулиган М. Йегоров ĕçне пăхса тухса, ăна икĕ çуллăха хупса усрамала турĕ. Колхозниксем суд приговорне ырларĕç.

М. Йемељйанов.

Пулни-иртнисем

Вăра тытнă. Февралĕн 4-мĕшĕнче Шупашкар хулинче, нумай вăхăт хушши вăра ĕçĕпе пурăннă 17 çулхи Йелена Трофимовăна тытнă. Ăна халь суд аллине панă. Хăй вăл Вăрмар районĕнчи Шикали йалĕнче çуралнă.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕ

Шупашкарта, Тĕп дезостанци çумĕнче

ДЕЗИНФЕКТОРСЕН 3 УЙĂХЛĂХ КУРСНЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕТ

Курса 7 çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Курсантсене вањљи общчежити пур, тата стипенди параççĕ.

Курсра вĕренме районсенчи сывлăха сыхлав пайĕсем панă командировкăсем тăрăх пынисене çеç йышăнаççĕ.

Занљатисем кăçалхи февралĕн 20-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

3—1

Академи театрĕнче

Февралĕн 9-мĕшĕнче

Чăвашла йубилейлă спектакљ

ПРЕМЙЕРА

М. ГОРЬКИЙ

„НА ДНЕ"

4 пайлă

Театрăн художествă руководителĕ Йе. Н. ТОКМАКОВ лартать.

Художник Н. Ф. БАЙАКОВ.

Талон № 105. Абонемент № 2

Талон № 12.

Кассă 3 сехетрен уçă.

ДИРЕКЦИ.

Сăра-квас хатĕрлекен

Шупашкарти предприйати

Атăл çинчен пăр касса турттарма

февралĕн 20-мĕшĕнче

ТОРГИ ТĂВАТЬ

Торгире пулас текен колхозсен çак адреспе пымала:

Ленинградскайа 29. Сăра-квас предприйати кантурĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—0

БУХГАЛТЕРСЕМ

ТАТА

БУХГАЛТЕР ПОМОШНИКĔСЕМ

КИРЛĔ

Çак адреспе пымала:

Шупашкар, М. Горький урамĕ № 5.

КОГИЗ.

СУТУ-ИЛŸ БАНКĔН

ЧĂВАШ КАНТУРНЕ

йалан ĕçлеме

Инспектор-економистсем

ТАТА

бухгалтер кирлĕ

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 70 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 52—94 ем. 1—1 п. л.